Г. ХАРЛАМПЬЕВ

48-131

# ÇАМРĂК ХУДОЖНИК



ЧĂВАШГОСИЗДАТ

1948

Г. ХАРЛАМПЬЕВ

# ÇАМРĂК ХУДОЖНИК

## ХĂРПĂРХĂЙ ТĔЛЛĔН ЎКЕРМЕ ВĔРЕНЕССИ

*Иккĕмĕш издани*

11 января г.
№ 5

ЧАССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР — 1948

## УМĔН КАЛĂНИ

Халĕ кашни ялта тенĕпе пĕрех вулав çурчĕсем, клубсем пур. Унта яланах стена хаçачĕсем кăларса тăраççĕ, тĕрлĕрен выставкăсем туса, вĕсене диаграммăсемпе, плакатсемпе, лозунгсемпе илемлетеççĕ.

Паллах, ку ĕçре ятарласа вĕреннĕ художниксем мар, пуринчен ытла колхозри çамрăксем, шкул ачисем, учительсем ĕçлеççĕ.

Анчах стена хаçатне, вулав çурчĕсемпе клубсене лайăх илемлетес тесен, кăштах та пулин ӳкерме пĕлни кирлĕ. Çавна шута илсе, çак кĕнекере вулав çурчĕсене, клубсене илемлетесси çинчен тата ӳкерчĕксем тума юратакан çамрăксене малтанхи вăхăтра пĕлме кирлĕ майсем çинчен кĕскен ăнлантарса панă.

Паллах, çак кĕнекепе усă курнипех ӳкерме вĕренсе, художник пулма пулать тесе шутлани пысăк йăнăш пулĕччĕ. Лайăх ӳкерме вĕренес пулсан нумай пĕлни, ку тĕлĕшпе пĕрмаях ĕçлени кирлĕ. Çапах та вулав çурчĕсенче, клубсенче ĕçлекенсене е, ӳкерчĕксем ӳкерес ĕçпе питех те интересленсе, художе-

ство шкулĕсене кĕме хатĕрленес текенсене ку кĕнеке тивĕçлĕ пулăшу пама пултарать.

Кĕнекене икĕ пая уйăрнă. Пĕрремĕш пайĕнче ÿкерме вĕренес ĕçе мĕнрен тытăнмаллине, сăрсемпе ĕçлеме вĕренессине малтанлăха кирлĕ таран ăнлантарса панă. Иккĕмĕш пайĕнче вулав çурчĕсенче, клубсенче ĕçлессипе кĕскен каланă.

Кĕнекепе тĕрĕс усă курас тесен, пĕрремĕш пайĕнче ăнлантарса панă уйрăм майсене, примерсене тĕплĕн ăнланса, унта илсе кăтартнă упражненисене темиçе хут ÿкерсе хăнăхни кирлĕ. Пĕр майлă примерсемпе усă курса, ÿкерчĕксене тĕплĕн ăнланса, ăна тĕрĕс ÿкерме вĕренмесĕр, урăх примерсем çине куçма кирлĕ мар.

Кĕнекере каласа панă майсене тĕрĕс ăнланма кашни примерах ÿкерчĕксемпе кăтартнă. Анчах, ăна тĕрĕс ăнланса илес тесен, кĕнеке çинчи ÿкерчĕксене ÿкерсе илме кирлĕ мар, унта кăтартнă пример евĕрлĕ харпăрхăй шухăшласа тупнă примерсем, урăх япаласем ÿкермелле. Сăмахран, кĕнекери 13-мĕш ÿкерчĕк çинче тĕрлĕрен япаласем (корзинка, кăшман, хăяр, кишĕр) лартса, натюрморт ÿкернĕ. Кун пек примера çав япаласенчен çеç мар, ытти япаласенчен те пуçтарса, темиçе хутчен те тата темиçе майлă лартса та ÿкерме пулать. Çавăн пекех, портрет, пей-

заж, композицилле ўкерчĕксем ўкернĕ чух та вĕсене тĕрлĕ майлă (тĕрлĕ положенире) ўкерме пулать.

Кĕнеке мĕнле кăмăла кайни çинчен, унта мĕнле çитменлĕхсем пурри çинчен çак адреспа çырса пĕлтерме ыйтатпăр: г. Чебоксары, Дом печати, Чувашгосиздат.

## ЎКЕРМЕ ВĔРЕНМЕ МĔНЛЕ ХАТĔРСЕМПЕ МАТЕРИАЛСЕМ КИРЛĔ

Ўкерме вĕренекенсене малтанлăха художниксене кирлĕ хатĕрсем пурте кирлех те мар. Вĕсене валли чи кирлĕ хатĕрсем: карандашсем, кистьсем, хулăнрах шурă хут, хура тушь тата 3—4 тĕслĕ акварельлĕ сăрсем пулаççĕ.

Ўкерчĕксем ўкерме кирек мĕнле хура карандаш та юрать. Пуринчен ытла „Конструктор" 2 е 3—В маркăллă çемçерех карандашсемпе усă кураççĕ. Кăмрăкпа усă курма та пулать. Ун пек кăмрăка кашниех хатĕрлеме пултарать. Ăна ак çапла тăваççĕ: хурăн йывăççин карандаш хулăнăш тураттисене илмелле те вĕсене хăйăр тултарнă чугун е тăм чўлмек ăшне хурса, вĕри кăмакана лартмалла. Хурăн тураттисем вара хĕрсе кăмрăкланаççĕ.

Акварельлĕ сăрсемпе тата тушпа ĕçлеме çемçе кистьсем кирлĕ. Кистьсене 2, 5, 7, 9, 12-мĕш номерлисене илмелле. Çуллă тата çи-

лĕмлĕ сăрсемпе ĕçлеме хытăрах шăртлă кистьсем кирлĕ.

Сăрсенчен кармин, ультрамарин, кадмий тĕслисем пулсан çитет. Çак виçĕ тĕслĕ сăрсене хутăштарса, ытти тĕссене те тума пулать.

Пĕр-ик сăмах мольберт çинчен. Мольберт вăл хут е ытти япаласене вырнаçтарса хурса ÿкермелли хатĕр—станок. Ăна, 2-мĕш ÿкерчĕкре кăтартнă пек, кашниех туса хатĕрлеме пултарать.




1 ÿк. Кистьсем. 3, 7, 9, 12 №-лисем акварельлĕ сăрсемпе, ыттисем çуллă сăрсемпе ĕçлемеллисем.




2 ўк. Акварельлĕ сăрсем тата мольберт.

# ӲКЕРМЕ МĔНРЕН ТЫТĂНМАЛЛА

Ӳкерме вĕреннĕ чух чи малтан ӳкерме çамăл, тӳрĕ линиллĕ япаласем илмелле. Çавăнпа та эпир малтан тăваткĕтеслĕ йывăç арчана ӳкерĕпĕр.

Йывăç арча илсе, ăна пĕр пуçне çеç курăнмалла туса, сĕтел çине лартатпăр. Арча çине сăнаса пăхнă хыççăн, эсир малтанах унăн пуçĕ тăваткĕтеслине куратăр. Унăн пур кĕтесĕсем те, аяккисем те пĕр пекех. Çапла ĕнтĕ, сире курăнакан арча пуçĕ квадрат евĕрлĕ. Халĕ, арчана сăнаса илнĕ хыççăн, ӳкерме тытăнма та пултаратпăр.

Хура карандаша вăрăм та çивчĕ шĕвĕртĕр. Унтан ăна виçĕ пӳрнепе вăрăммăн, çăмăллăн тытса ӳкерме тытăнăр.



3 ӳк. Карандаша тĕрĕс çапла тытмалла.

Чи малтан, ӳкерчĕке хут листи çине тĕрĕс вырнаçтарас шутпа, карандаша хытă пусмасăр çинçе линисемпе паллă туса тухăр. Ӳкерчĕке ытла пĕчĕк мар, хут листи çине шăп вырнаçмалла тăвăр.

Ӳкерчĕке вырнаçтарма паллă туса хунă хыççăн,

аялта тата çӳлте выртакан линисене сылтăмран сулахаялла тӳрĕ туртса хурăр. Унтан икĕ вертикальлĕ линие горизонтальлĕ линисемпе тӳрĕ кĕтессем пулмалла пĕтĕштерсе хурăр. Вăл линисен тăршшĕсем пурин те пĕр пек пулччăр. Çакăн хыççăн сирĕн квадрат пулса та тăчĕ.

Квадрат тĕрĕс пулмасан, йăнăш вырăнсене резинкăпа тасатса, тепĕр хут хурарах, паллăрах линисемпе тӳрлетсе хурăр. Кун пек упражнение темиçе хут туса, тĕрĕс ӳкерме вĕреннĕ хыççăн, урăх упражненисем тума та пултаратăр.



4 ӳк. Квадрат.

Халĕ арчана пусĕпе хăрах аякки курăнмалла лартăр. Анчах малтан ăна каллех тĕплĕн сăнаса пăхăр, мĕншĕн тесен çапла лартнă чухне унăн икĕ енĕ икĕ еннелле кайса ансăрланса пынă пек туйăнаççĕ.

Çапла лартнă хыççăн ăна уçса хурăр. Çакăн хыççăн ăна ӳкерме татах йывăрланчĕ. Унăн хупăлчи те, çав икĕ енĕсем пекех, пирĕн куçа ансăрланса, шĕвĕрленсе пынă пек туйăнать. Унăн аяккисемпе тӳрĕ линисем туртса кайсан, вĕсем пĕр точкăра пĕрлешеççĕ (5-мĕш ӳкерчĕке пăхăр).

Ăнланмалларах пултăр тесен, тепĕр при-

мер илсе пăхăпăр. Сăмахран, пӳрт чӳречине аякран кайса пăхсан, унăн çӳлтипе аялти хĕррисен линийĕсем каллех пирĕн куçран инçене юлнăçемĕн ансăрланса пынă пек туйăнаççĕ. Вăл линисене шухăшпа тăсса кайсан, вĕсем




5 ӳк. Арча. Перспективăпа кăтартнă.

пирĕн куç тĕлĕнче горизонтра тĕл пулаççĕ. Линисем çакăн пек ансăрланса пырса, горизонтра пĕр точкăра тĕл пулнине перспектива теççĕ. Перспектива правилине

пĕлни пире ӳкерчĕкре япаласене объемлă туса кăтартма пулăшать. Ăна тĕплĕн ăнланса илес тесен, эсир çак арчанах çӳлте кăтартнă майлă (е тата урăхла та) лартса ӳкерĕр. Вăл ӳкерчĕк тĕрĕссипе тĕрĕс пулманнине эсир çак 5-мĕш ӳкерчĕкре кăтартнă пек линисемпе тĕрĕслесе пăхăр.

Халĕ çаврашка япала — тарелка ӳкерсе пăхăпăр. Ăна малтан эсир хăвăра хирĕç тӳрĕ тытса пăхăр. Кун пек пăхсан, вăл сире çап-çавракан курăнать. Эсир кун пек çаврашкасене циркульпе те ӳкерме пултаратăр. Çавăнпа та эпир ăна циркульпе ӳкерме çук майлă лартса, циркульсĕр ӳкерĕпĕр.

Халĕ ăна сĕтел çине кăшт тайăлтарса лартса пăхăр. Кун пек лартса пăхсан, вăл сире тăрăхла ункă пек курăнать. Ăна мĕн чул ытларах тайăлтаратăр, вăл çавăн чул тăрхаланнă пек курăнать.

Тарелкăна чи варри тĕлĕнчен урлă каçа çиппе çыхса хурăр. Унтан çиппине горизонтальлĕ выртмалла туса, тарелкине каялла чалăштарса лартăр. Ăна лайăхрах сăнаса пăхсан, унăн çӳлти çурри аялтинчен ансăртараххăн курăннине асăрхатăр. Тарелкăна малалла чалăштарса хурсан, эсир унăн аялти çурри ансăртараххăн курăннине сăнаса илетĕр. Çакăн пек курăннине çаврашкан перспективи теççĕ.



6 ӳк. Тарелка: сулахайри—тӳрӗ тытсан, сылтӑмри—чалӑштарсан.

Ҫавӑнпа та ӑна ӳкернӗ чухне малтан хут ҫине ҫав ҫип вырӑнне пӗр тӳрӗ лини туртса хурӑр. Унтан ҫав лини varrипе кӑшт кӑна палӑракан ҫинҫе линипе тарелкӑна ӳкерме пӗр туса хурӑр. Перспектива тӗлӗшӗпе тӗрӗс турӑр пулсан, урӑхла каласан, тӑрӑхла ункӑн ҫӳлти ҫурри ансӑртарах, аялти сарлакарах пулсан, варри урлӑ туртса хунӑ тӳрӗ линие резинкӑпа тасатса, кирлӗ линисене карандаша хытӑрах пусса ӳкерсе тухӑр. Ҫапла сирӗн тарелка ӳкерчӗкӗ те хатӗр пулать.

Халӗ тӑм кӑкшӑм ӳкерсе пӑхӑпӑр. Унӑн ҫур ункӑллӑ линисем пур. Кӑкшӑма ӳкернӗ чухне унӑн мӑйӗпе хырӑмне танлаштарса пӑхса, вӗсен хушшинчи виҫине (пропорцине) тупасси—чи паллӑ задача пулса тӑрать. Ӑна

(пропорцие) кăкшăма виççе мар, куçпа пăх-сах. шутласа илме вĕренмелле. Калăпăр, эсир ӳкерекен кăкшăмăн аялти пайĕ çӳлтинчен 1,5 хут çӳллĕрех. Ку виçене (пропорцие) шутласа тупвă хыççăн, хут листи çине çинçе линисемпе паллă туса хурăр. Ĕç çăмăлтарах пултăр тесен, хут листин варри тĕлĕнчен çӳлтен аялалла пĕр тӳрĕ лини туртса хурăр. Ку лини çине вара кăкшăмăн пĕтĕм çӳллĕшне, унăн çӳлтипе аялти пайĕсене паллă тăвăр.

Çапла тусан, кăкшăм тутине (анине) ӳкерес шутпа, çӳле хăвăра курăнакан тăрахла ункăна ӳкерсе хурăр. Унтан çав тăрăхла ункăн икĕ аяккине аялалла, кăкшăм хырăмĕ виçи тĕлне çитиччен икĕ тӳрĕ лини туртса хурăр. Халĕ аялти пайне (хырăмне) ӳкерес майпа вăхăтлăха кăкшăм хырăмĕ тĕлĕнчен урлăлла пĕр тӳрĕ лини туртса, вăл лини çине кăкшăм хырăмĕн сарлакăшне паллă туса хурăр. Унтан çав виçепе кăкшăм хырăмĕ вырăнне çаврашка ӳкерĕр. Юлашкинчен, кăкшăм тĕпне ӳкернĕ хыççăн, вăхăтлăха тунă ытлашши линисене резинкăпа тасатса, кирлĕ линисене паллăрах ӳкерсе ĕçе пĕтерме те пултаратăр.

Çапла ĕнтĕ, пирĕн кăкшăм ӳкерчĕкĕ хатĕр тейĕпĕр. Анчах ку кăкшăм ӳкерчĕкĕ пире килĕшмест-ха, вăл пире лапчăк пек курăнать. Ăна чăн-чăн кăкшăм пек тăвас тесен, ту-



7 ўк. Кăкшăм: сулахайри—кăкшăмăн контурĕ, варринчипе сылтăмрине икĕ майпа тушовка тунă.

шовка тенĕ майпа усă курмалла пулать. Эпир ку кĕнеке çинче карандашпа ўкернĕ чух икĕ майпа тушовка тăвассине кăтартатпăр (7-мĕш ўкерчĕк çине пăхăр). Ку майсенчен штрихсемпе тунă тушовкăна тĕрĕсрех тесе шутлаççĕ. Тушовкăна карандашсăр пуçне кăмрăкпа та тума пулать. Ăна тума ўкерчĕкĕн пĕтĕм контурне тусан тин тытăнмалла. Ăна тытăниччен малтан ўкерекен япала çинче хăш тĕлте чи тĕттĕм, хăш тĕлте çутăрах, хăш тĕлте чи çуттине тĕплĕн пăхса уйăрса илмелле.

Кашни япала çинех çутă ўкет пулсан, ун çинче вара çутăлса тăракан çутă, çур тĕксĕм, тĕксĕм, урăх япаларан ўкекен çутă (реф-

лекс) пур. Çутă яланах малтан çуртĕксĕме, унтан тĕксĕме, е çуртĕттĕме, унтан тĕттĕме куçса пырать. Ăна уйăрса илес тесен, çуттине тĕттĕммипе тата çуртĕттĕммипе танлаштарса пăхмалла. Çакна пĕлес майпа эсир хăвăр умри кăкшăм çинех пăхăр. Чи çутă вырăн—çутăлса тăракан вырăн пулать. Çутăпа тĕттĕм вырăнсен хушшине çинçе йĕрпе паллă туса тухăр. Ăна уйăрса илнĕ хыççăн, малтан чи тĕттĕм вырăнсенчен пуçласа, ерипен çутăрах вырăнсене куçса, тушовка тума тытăнăр. Тĕттĕм вырăнсене тушовка тунă чух карандаша хытăрах пусса, штрихсене хулăнрах, çутăрах вырăнсене куçнă май çăмăллăн пусса çинçерех туса пырăр. Тĕттĕм вырăнсене штрихлеме çемçерех (1-мĕш №-лĕ) карандашпа ĕçлес пулать.

Тушовка тунă чух ăна тĕплĕн шухăшласа, штрихсене тирпейлĕн, пĕр еннелле тумалла. Тушовка тумалли майсенчен чи тĕрĕсреххи вăл, ўкерекен япалан форми майĕпе, формăна пĕрмай пăхăнса туни пулать. Тушовка тунă чух, япалана ўкернĕ чухнехи пекех, япалан тĕрлĕ кирлĕ мар вак-тĕвекĕсене кăтартасшăн тăрăшма кирлĕ мар, чи малтан япалан пĕтĕм формине кăтартма тăрăшмалла.

Тушовкăна тĕплĕн вĕренсе, ăна тĕрĕс тума пĕлни сăрсемпе ĕçленĕ чухне питĕ пулăшать. Тушовкăна карандашсăр пуçне кăм-



ЧУВАШСКАЯ КНИЖНАЯ ПАЛАТА Чувашской АССР

ракпа та аван тума пулать. Кăмрăкпа ĕçленĕ чухне тунă йăнăшсене резинкăсăр пуçне пир татăкĕпе те тасатса тӳрлетме пулать.

Çапла ĕнтĕ эпир халĕ çаврашка, çур çаврашка япаласене ӳкерессипе, унти хăшпĕр правилăсемпе паллашрăмăр. Кун пек япаласене ӳкерме пĕлни вăл кирек мĕнле çаврашкаллă е шар евĕрлĕ япаласене ӳкернĕ чухне те кирлĕ. Шар ӳкернĕ чух пĕр тĕрĕс çаврашка-ункă туни çеç кирлĕ. Çакăн хыççăн унăн формине тушовкăпа тĕрĕс туса кăтартасси çеç юлать. Çавăнпа та çаврашка е чăмăр япаласене ӳкернĕ чухне пуринчен ытла тушовка тума аван пĕлни кирлĕ пулать.



8 ӳк. Шар.

Эпир япаласене пĕрерĕн, уйрăммăн илсе çеç ӳкертĕмĕр. Халĕ темиçе япалана пĕрле ӳкерме вĕренĕпĕр. Сăмахран, çав малтан ӳкернĕ япаласенех (арча, кăкшăм, тарелка тата ытти те) пĕрле ӳкерĕпĕр. Вĕсене мĕнле ӳкересси çинчен эпир кунта тепĕр хут каласа тăмăпăр, анчах вĕсене епле пĕрлештерсе, вырнаçтарса лартасси çинчен пăртак чарăнса тăрăпăр.

Темиçе япалана пĕрле ӳкернĕ чухне вĕсене епле вырнаçтарса лартассипе вĕсене хăш енчен пăхса ӳкерессине пĕлни, вĕсен илемлĕ енне тупма хăнăхни питĕ кирлĕ. Вăл пейзажсене тата çынсене ӳкернĕ чухне питĕ пулăшать.

Кун пек чухне япаласене илемлĕн вырнаçтарса лартма эсир хăвăр та çăмăллăнах пултаратăр. Илемлĕ пĕрлештерсе лартас тесен, вĕсене темиçе майлă та лартса пăхни кирлĕ. Мĕнле лартсан илемлĕн курăнать, çавăн пек лартса ӳкерме пулать. Тĕслĕхе эпир кăкшăм, чей чашки тата пĕр-пĕр кубла япалана пĕрле вырнаçтарса лартса ӳкерĕпĕр. Вĕсен хыçне, фон вырăнне, пĕр-пĕр пир татки е алшăли çакса ярăпăр (9-мĕш ӳкерчĕке пăхăр).



9 ӳк. Темиçе япалана пĕрле ӳкерни.

Вĕсене ӳкернĕ чухне пуринчен ытла хут листи

çине вырнаçтарма пĕлни кирлĕ. Çавăнпа та хут листине çÿллĕшпе е тăршшĕпе тытса ÿкерме пĕлни те кирлĕ. Кунта кăтартнă япаласене ку майпа лартса ÿкерес пулсан, паллах, хут листине çÿллĕшпе тытса ÿкермелле. Эсир çакна яланах асра тытăр.

Ку вăхăтчен эпир карандашпа е кăмрăкпа çеç ÿкертĕмĕр. Халĕ перопа ÿкерсе пăхăпăр. Перопа ÿкерме ахаль перопа хура тушь çеç кирлĕ.

Перопа ÿкерес техникăна хăнăхас майпа эпир малтан пĕр-пĕр ÿкерме çăмăлтарах япала, сăмахран, чей чашки илĕпĕр. Малтан ăна карандашпа çинçе линисем туса ÿкерĕр. Унтан, кирлĕ мар линисене резинкăпа тасатса, перопа ÿкерме тытăнăр.

Перона тушь çине чиксе илсе, тушне перо çине кăшт илĕр те (нумай илсен тумлама пултарать) малтан чей чашкин контурне ÿкерсе тухăр. Унтан, чей чашкин объемлăхне кăтартма, тĕттĕм енне штрихлесе тĕттĕмлетĕр. Штрихлеме темиçе майпа та пулать. Эпир кунта икĕ майлă штрихленине кăтартатпăр.

Перопа ÿкерсе штрихленĕ чухне алăна аван хăнăхтарни кирлĕ. Паллах, вăл нумай ÿкернинчен çеç килет. Кунсăр пуçне перопа ÿкерес техникăна вĕренме кĕнекесем çинчи ÿкерчĕксем пулăшма пултараççĕ. Кĕнекесене

ялanах профес-силлĕ художниксем илем-летеççĕ. Ан-чах та кĕне-кери ўкерчĕк-сенчен ўкер-се илме кирлĕ мар, вĕсен тех-никипе паллашма çеç кирлĕ. Ку тĕлĕшпе пуринчен ытла паллă художниксен ўкерчĕкĕ-семпе паллашма тăрăшмалла.



10 ўк. Чей куркисем (штрихлесе ўкернĕ).

Халĕ кистьпе ўкерес майпа паллашăпăр. Кистьпе ўкерме карандашпа тушсăр пуçне тата кисть, стакан, тушь шĕветмелли чей чашки кирлĕ. Хальхинче чейник ўкерĕпĕр.

Малтан каллех чейникĕн контурне каран-дашпа туса тухăр. Унтан кистьне тушь çине чиксе илĕр те ўкерчĕке лаптăкăшпех хурат-са тухăр. Çапла лаптăкăшпех хуратса ўке-



11 ўк. Заливкăпа ўкернĕ чейниксем.

рессине заливка теҫҫӗ, ӳкерчӗкне хӑйне силуэт теҫҫӗ. Ҫапла майпа кирек мӗне те ӳкерме пулать. Кун пек ӳкернӗ чухне япала ҫинче ҫутӑлса тӑракан вырӑнсене асӑрхӑр. Ҫав вырӑнсене сӑрламасӑр хӑварсан, ӳкерчӗк питӗ илемлӗ пулать.



12 ӳк. Панулми.

Юлашкинчен, туша шывпа шӗветсе ӳкерес майпа паллашӑпӑр. Паллах, ку майпа ӳкерме йывӑртарах. Ҫавӑнпа та эпир сире ку майпа ытларах ӗҫлесе, алсене хӑнӑхтарма сӗнетпӗр.

Ӳкерчӗк тума пӗр панулми илӗпӗр. Малтан карандашпа унӑн контурне туса тухӑпӑр. Унтан кисть ҫине пӗртак тушь илӗр те ӑна чей чашки ҫине ярӑр. Кун хыҫҫӑн кисть ҫине шыв илсе чей чашки ҫине янӑ туша шупкаланиччenex шӗветӗр. Вара ҫав шӗветнӗ тушпа панулми ӳкерчӗкне лаптӑкӗпех сӑрласа хурӑр. Сӑрланӑ чух сулахайран сылтӑмалла, кистьне хутран уйӑрмасӑр сӗрсе каймалла. Шурӑ хӑварас тенӗ вырӑнсене

карандашпа малтанах паллă тăвăр. Вĕсене вара тушпа сăрламасăр хăварас пулать.

Кун хыççăн ўкерчĕк типиччен тăхтаса тăрас пулать. Вара каллех туша чей чашки çине кистьпе ярăр та, ăна кăшт шывпа шĕветсе, улман тĕксĕмрех вырăнĕсене кирлĕ таран хуратса тухăр. Çакăнпа ĕнтĕ ку ўкерчĕке хатĕр тесе шутлама та пулать.

Çак техникăпа ўкерме вĕренни вăл акварельлĕ сăрсемпе ўкернĕ чухне питĕ кирлĕ. Кун пек ўкернĕ чухне тĕксĕмрех вырăнсене ытлашши хуратса йăнăш тунă пулсан, ăна резинкăпа тасатса е шывпа çуса тўрлетме пулать.

Шывпа çуса тўрлетес пулсан, малтан кистьри туша шывпа çуса тасатмалла. Унтан таса кисть çине каллех шыв илсе, йăнăш тунă вырăнсене çуса ямалла. Çунă чухне, паллах, кисть каллех хуралать. Вара ăна каллех таса шывпа çуса тасатас пулать. Кисть лайăхрах тасалтăр тесен, ăна шывпа çуса тасатнă хыççăн, пир таткипе шăлса типĕтмелле.

## АКВАРЕЛЬЛĔ СĂРСЕМПЕ ЎКЕРЕССИ

Халĕ акварельлĕ сăрсемпе ўкересси çинчен калаçăпăр. Мĕнле тата миçе тĕслĕ сăрсем кирли çинчен эпир малтанах каланăччĕ. Ак-

варельлĕ сăрсемпе ӳкерме шыва час сăхман хут кирлĕ. мĕншĕн тесен акварельлĕ сăрсене шывпа ирĕлтереççĕ. Ик-виçĕ тĕслĕ сăрсене пĕрле хутăштармалла чухне, вĕсене таса кистьпе кашнине уйрăм илсе, чей чашки çинче хутăштармалла. Пĕр тĕслĕ сăра нихăçан та тепĕр тĕслĕ сăр çинче хутăштарма юрамасть.

Халĕ пĕр тĕслĕ сăрпа сăрласа, пĕр çăмăл упражнени туса пăхăпăр. Каллех пĕр панулми çеç илĕпĕр. Малтан карандашпа унăн контурне туса тухар. Унтан кисть çине шыв илĕр те хĕрлĕ сăра чей чашки çинче шĕввĕн ирĕлтерĕр. Кун пек шĕвĕ ирĕлтернĕ хĕрлĕ сăр вăл шупка хĕрлĕ тĕс тăвать. Унтан çав шупка хĕрлĕ тĕспе улман карандашпа тунă контурне лаптăкĕпех хăвăрт сăрласа тухар та типиччен тăхтаса тăрар. Типнĕ хыççăн ăна каллех çав сăрпах тата тепĕр хут сăрласа тухар. Çапла вара ку ӳкерчĕк шупкарах хĕрлĕ тĕслĕ пулса тăчĕ. Панулмин пĕтĕм объемне кăтартма, кисть çине сăр ытларах илсе е çăрарах сăр туса, тĕттĕм вырăнсене тепĕр хут сăрласа тухмалла. Халĕ эпир ку панулмине юриех хĕрлĕ тĕслĕ турăмăр-ха.

Çапла ĕнтĕ эпир ку ӳкерчĕкре пĕр тĕслĕ сăрпах, ăна шĕвĕрех е çăрарах ирĕлтернипе, темиçе тĕслĕ сăр та тума май килнине кур-

тӑмӑр. Халӗ ик-виҫӗ тӗслӗ сӑрсене хутӑштарса, урӑх тӗс туса пӑхӑпӑр.

Ака пирӗн виҫӗ тӗслӗ сӑр пур: кадмий (сарӑ), кармин (хӗрлӗ), ультрамарин (кӑвак). Малтан эпир кадмийпе карминне те пӗр виҫеллӗ илсе, хутӑштарса пӑхӑпӑр. Ку икӗ тӗсе пӗр пек хутӑштарсан, урӑх тӗс—оранжевӑй (кӗрен) тӗс пулать. Карминне ытларах илсен вӑл—тӗксӗмрех, кадмийне ытларах илсен—ҫутӑрах пулать.

Халӗ тата кадмийне ультрамаринпа хутӑштарса пӑхар. Ку икӗ тӗсрен пирӗн тата урӑх тӗс—симӗс пулса тӑчӗ. Юлашкинчен карминпе ультрамаринне хутӑштарсан тата урӑх тӗс—фиолетовӑй тӗс (кӑвак кӗрен) пулать.

Ҫапла ӗнтӗ, эпир виҫӗ тӗслӗ сӑрӑран ултӑ тӗс турӑмӑр. Кунсӑр пуҫне тата пӗр тӗслӗ сӑррине сахалтарах, теперне ытларах илсе хутӑштарсан тата урӑх тӗс пулнине пӗлетпӗр.

Сӑрсене хутӑштарса урӑх тӗс тӑвассине ҫеҫ мар, вӗсен килӗшӳлӗхне пӗлни те питӗ кирлӗ. Пӗр тӗслӗ сӑрӑн ҫутӑлӑхӗ, илемлӗхе ун ҫумӗнчи урӑх тӗслӗ сӑрӑран та килет. Ӑна эпир пӗр пӗчӗк опыт туса пӑхнипех ӑнланса илме пултаратпӑр. Сӑмахран, пӗр кӑвак тӗслӗ хутран икӗ пӗр пек виҫеллӗ тӳркетеслӗхсем касса кӑларӑр та, вӗсенчен пӗрне хура хут, теперне шурӑ хут ҫине хурса пӑхар. Хура хут ҫине хунӑ кӑвак хут пире

шурă хут çинчинчен уйрăмах шупкан курăнать. Çавăн пекех сарă хутран касса кăларса пăхар. Хура хут çинче сарă хут шурă хут çинчинчен çутăрах курăнать. Çапла ĕнтĕ, ку опыт тăрăх эпир сăрсен килĕшӳлĕхĕ вĕсене пĕлсе вырнаçтарнинчен те питĕ нумай килнине пĕлетпĕр. Кун пек сăрсен килĕшӳлĕхĕсенчен чи паллăраххисем—çутăраххисем çакăн пек пулаççĕ:

а) хура çумĕнче шурă е сарă;

б) шурă çумĕнче хура, тĕксĕм кăвак е тĕксĕм хĕрлĕ;

в) хĕрлĕ çумĕнче симĕс е тĕксĕм кăвак;

г) сарă çумĕнче симĕс е хура.

Халĕ тата акварельлĕ сăрсемпе хĕрлĕ кăшманпа хăяр ӳкерсе пăхăпăр. Вĕсен тĕсĕсене сăрсемпе чăн-чăн пек ӳкерме тăрăшăпăр.

Сăнасарах пăхсан, эпир хĕрлĕ кăшманра кăвак-кĕрен, шупка кăвак, тĕксĕм хăмăр тĕссем т. ыт. пуррине куратпăр. Çавăн пекех хăярта та çутă-симĕс, сарă-симĕс, кăвак-симĕс тĕссем куратпăр. Пирĕн умра халĕ вăл тĕссене сăрсемпе ӳкерсе кăтартас задача тăрать.

Малтан кисть çине шыв илĕр. Унтан чей чашки çинче хĕрлĕпе кăвак сăрсене хутăштарăр (кăвак сăррине ытларах илĕр). Хутăштарса тунă кăвак-кĕрен тĕслĕ сăрпа хĕрлĕ кăшман ӳкерчĕкне сăрласа хурăр.

Акварельлӗ сӑрсемпе ӳкернӗ чухне яланах кисть ҫине сӑрсене сахал илме тӑрӑшмалла, шывне ытларах илмелле. Эпир те халӗ ҫавӑн пекех тӑвӑпӑр. Ӳкерчӗке кӑшт типме парса, тӗксӗм пулмалли вырӑнсене хӑмӑрпа кӑвак сӑрсене хутӑштарса тунӑ сӑрпа сӑрласа, кӑшманӑн объемлӑхне парар. Унтан каллех ҫав сӑрпах, анчах кӑваккине ытларах илсе хутӑштарса, чи тӗксӗм пулмалли вырӑнсене сӑрласа тухар. Ҫакӑнпа малтанлӑха ӳкерчӗк хатӗр теме те пулать. Халӗ хӑяр ӳкерме тытӑнӑпӑр.

Хӑяр ӳкернӗ чух та эпир ӑна ҫак майпах сӑрласа тухӑпӑр. Малтан шупка симӗс тӗслӗ сӑрпа ӳкерчӗке лаптӑкӗпе сӑрласа тухар. Унтан ӑна типме парса, ҫӗнӗрен хутӑштарса тунӑ сарӑрах тӗслӗ сӑрпа кирлӗ вырӑнсене сӑрласа тухар. Куна туса пӗтернӗ хыҫҫӑн, эпир тепӗр хут хӗрлӗ кӑшман ӳкерчӗкне тӗплӗн ӳкерме тытӑнӑпӑр.

Типнӗ хыҫҫӑн кӑшман ӳкерчӗкӗ ҫине пӑхсан, эсир вӑл кӗтмен ҫӗртенех шупкаланса кайнине асӑрхатӑр. Сӑрсен тӗсӗсем типнӗҫем малтан сӑрланӑ чухнехинчен шупкаланаҫҫӗ. Ҫапла пулмалла та. Ҫавӑнпа та акварельлӗ сӑрсемпе ӳкернӗ чух сӑрсен тӗсӗсене кӑшт тӗксӗмрех туни кирлӗ. Ҫапла ӗнтӗ, хӗрлӗ кӑшманпа хӑяр ӳкерчӗкӗсен тӗттӗмрех

пулмалли вырӑнӗсене пирӗн кирлӗ таран тепӗр хут тӗксӗмлетсе тухмалла.

Кӑшманпа хӑяр ӳкерчӗкӗсене лаптӑкӑшпе пӗр тӗспе сӑрласа тухнӑ чух чи ҫутӑ пулмалли вырӑнсене кӑтартмасӑр хӑварма та пултаратӑр. Ку йӑнӑш туни мар, мӗншӗн тесен эпир ӑна халӗ те ҫутатма пултаратпӑр. Ӑна ҫутатас пулсан таса кисть ҫине шыв илсе, вӑл вырӑнсене ҫуса яни ҫеҫ кирлӗ. Анчах та ку майпа сӑрсене пӗтӗмпех ҫуса яма ҫук, вӗсен тӗсӗсем кӑшт та пулин палӑрса тӑраҫҫӗ. Ҫавӑнпа та ӳкерчӗкӗн ҫутӑлса тӑмалли вырӑнӗсене малтанах сӑрламасӑр хӑварсан авантарах.

Ҫапла ӗнтӗ ку пример тӑрӑх эпир акварельлӗ сӑрсемпе ӳкернӗ чух тунӑ йӑнӑшсене шывпа ҫуса ярса тӳрлетме май пуррине пӗлтӗмӗр. Япӑх хут ҫине ӳкернӗ чух тунӑ йӑнӑшсене темиҫе хут ҫуса ярса тӳрлетме май ҫук, кун пек чухне вара ҫӗнӗрен ӳкерме лекет.

Халӗ тата эпир ӳкерме йывӑртарах ӳкерчӗк—натюрморт—ӳкерсе, ӑна акварельлӗ сӑрсемпе сӑрласа пӑхӑпӑр. Ӑна тума хулӑран тунӑ пӗр корзинка, ик-виҫӗ хӑяр, кӑшман тата кишӗр илӗр те, вӗсене сӗтел ҫине ҫапла вырнаҫтарса тухӑр: корзинкине хыҫала хӑяккӑн, ыттисене ун умне вырнаҫтарса хурӑр. Яланхи пекех карандашпа малтан вӗсен кон-

турне ӳкерсе тухăпăр, унтан вара сăрсемпе сăрлама тытăнăпăр.

Вĕсене тĕсĕсен çуталăхĕ енчен пăхсан çакă палăрать: чи çутăраххи хăярсемпе кишĕр, тĕксĕммисем—кăшмансем пулаççĕ. Кун пек чухне сăрсемпе ӳкерме мĕнрен тытăнмаллаха?

Ку тĕлĕшпе кашни художник хăй евĕр ӳкерет. Пĕрисем чи малтан çутăрах япаласенчен ӳкерме тытăнаççĕ, теприсем—тĕксĕммисенчен, виççĕмĕшсем—малта выртакан япаласенчен. Анчах та кунта пуриншĕн те пĕр правило пур: пĕр-пĕр япалана ӳкернĕ е сăрланă чухне ăна яланах ун çывăхĕнчи ытти япаласемпе танлаштарса пăхса ӳкермелле. Çапла ĕнтĕ эпир те ку ӳкерчĕке ӳкерме малтан çав япаласен (натюрмортăн) фонне—стенана сăрланинчен пуçăнапăр.

Çапла, ку натюрмортăн фонĕ тĕксĕм хăмăртарах пĕренеллĕ стена пулать. Куççене кăштах хĕссе, натюрморта унăн фонепе—стенапа танлаштарса пăхăр. Кун пек пăхсан эсир, натюрморт стенаран çывăхра пулсан та, вăл фонран—стенаран—паллах уйăрăлса тăнине асăрхаса илетĕр. Куна çеç те мар, эсир тата кун пек пăхсан фонри (стенари) мĕн пур вак-тĕвексем çухалса пĕр тĕксĕм лаптăк çеç тăрса юлнипе натюрморт тата илемлĕн курăнса тăнине асăрхаса илетĕр.

Мĕншĕн тесен, куçсене хĕссе пăхнипе эпир япаласен чи малтан куçа курăнакан илемлĕхĕсене çеç куратпăр, вĕсен мĕнпур вак-тĕвекĕсем пирĕн куçа курăнмаççĕ.

Çапла куççене хĕссе пăхни кун пек натюрмортсене ӳкернĕ чухне çеç мар, пейзажсемпе портретсене ӳкернĕ чухне те кирлĕ. Вăл пире тĕслĕхсен чи кирлисене асăрхаса илме хăнăхтарать. Ӳкерчĕк фонĕн вак-тĕвекĕсене ӳкерсе тăни кирлĕ мар. Çапла ентĕ, эпир те çак ӳкерчĕк фонне ӳкернĕ чух пĕренесене уйрăммăн ӳкерсе тăмасăрах малтан çутăрах хăмăр тĕспе, унтан, вăл типнĕ хыççăн, тĕттĕмрех тĕспе сăрласа тухăпăр.

Натюрморта вырнаçтарса хунă чух яланах çутăрах япаласене тĕксĕм фон тĕлне, тĕксĕмрех япаласене çутă фон тĕлне хураççĕ. Ку майпа ӳкерчĕкре тарăнлăха (глубина) тата пространствăна кăтартма пулать. Анчах ку вăл пĕр май кăна, кун пек майсем татах та пур.

Халĕ малаллахи ĕçе тытăнăпăр. Чей чашки çинче хăмăрпа сарă сăрсене хутăштарса тунă тĕспе корзинкăн çутă вырăнĕсене сăрласа тухар. Унтан хăмăрпа кăвак сăрсене хутăштарса тунă сăрпа корзинкăн тĕттĕм вырăнĕсене сăрласа тухар.

Эпир корзинкăпа стена тĕсĕсене уйрăммăн пăхса ӳкернĕ пулсан, тен вĕсене пĕр тĕслĕ

сăрсемпех сăрланă пулăттăмăр. Анчах та, фонпа корзинка тĕсĕсене пĕр вăхăтрах танлаштарса пăхса ўкернипе эпир ĕнтĕ пулма пултаракан йăнаша тумарăмăр. Пирĕн корзинкăн çутă вырăнĕсем фон (стена) тĕсĕнчен çутăрах е фонран пачах урăх тĕслĕ пулчĕç.

Халĕ ĕнтĕ ыттисене ўкерĕпĕр. Кăшмансемпе хăярсене мĕнле майпа ўкерессине эсир пĕлетĕр ĕнтĕ. Кишĕре ўкересси те çавăн пекех. Вĕсен уйрăмлăхĕ те пĕр тĕсĕсенче çеç. Хĕрлĕпе хăмăр сăрсене хутăштарса тунă



13 ўк. Натюрморт.

шупкарах тĕспе кишĕр ўкерчĕкне лаптакĕпех сăрласа тухăр. Вăл типнĕ хыççăн, çав сăрпах, анчах кăшт тĕксĕмрех туса, тĕттĕмрех вырăнсене, унтан тĕттĕм хăмăр тĕспе чи тĕттĕм вырăнсене сăрласа тухăр. Çапла ĕнтĕ сĕтел хăмине тата ун çинчи япаласенчен ўкнĕ тĕксĕмсене кăтартса ўкересси çеç юлать.

Кун пек нумай япаласене пĕрле ўкернĕ чухне яланах япаласен тĕсĕсен вăйне пĕр-пĕринпе танлаштарса пăхса, малти япаласене хыçалтисенчен çутăрах тума тăрăшни кирлĕ. Сăмахран, кишĕре хăярсемпе, кăшмансемпе танлаштарса пăхсан, вăл вĕсенчен çутăрах пулмалла. Хыçалти япаласене тĕрĕс сăрламалла, вĕсем мала тухса тăма кирлĕ маррине яланах асра тытмалла.

Тĕрĕссипе каласан, кун пек натюрмортсенче тĕссен вăйĕнчи уйрăмлăх, урăхла каласан, сывлăшри перспектива паллăнах курăнса тăмасть. Анчах та, урăх çĕрте, калăпăр, пейзажсем ўкернĕ чухне, ку сывлăш перспективине тĕрĕс кăтартса ўкерни питĕ кирлĕ пулса тăрать.

Сывлăш перспективи вăл çутăпа тĕс свойствинчен килет. Ку свойствăна пула пире сывăхри япаласем инçетрисенчен çутăрах пек курăнаççĕ. Кў ыйту тĕлĕшпе эпир пейзажсем ўкерме вĕреннĕ чух татах калаçăпăр ха.

Çапла ĕнтĕ эпир пĕтĕм ӳкерчĕке шупкарах тĕссемпе сăрласа тухрăмăр. Вĕсене кăшт тĕттĕмрех тăвас тесен, каллех малтан фонран пуçласа, ӳкерчĕкĕн тĕсне пĕтĕмĕшпе тĕттĕмлетмелле, унтан япаласен кирлĕрех вырăнĕсене тӳрлетсе тухмалла. Çапла вара ӳкерчĕк хатĕр теме те юрать.

Акварельлĕ сăрсемпе ӳкерме часах вĕренме май çук, нумай тăрăшас пулать, ӳкерчĕксем тăва-тăва хăнăхас пулать, вара вĕренме пулатех. Эпир кунта чи малтан пĕлме кирлĕ, çăмăлтарах майсемпе çеç паллашрăмăр.

## ПЕЙЗАЖСЕМ ӲКЕРЕССИ

Пейзажсем ӳкерме кашни ялтах тĕрлĕрен сюжетсем тупма пулать. Пире малтанлăха уйрăм йывăççене, çуртсене ӳкерме вĕренсен те çитĕ, тӳрех йывăрринчен ӳкерме пуçламăпăр. Пăртак хăнăхсан йывăртарах сюжетсем те ӳкерме юрать.

Пейзажсем ӳкернĕ чух та çав ытти япаласене ӳкернĕ чухнехи майсемех кирлĕ пулаççĕ. Пуринчен ытла япаласене пĕтĕм формипе илсе ӳкерме вĕренмелле, сăмахран йывăççăн тураттисене е çулçисене уйрăм ӳкерсе тăни кирлĕ мар, малтанлăха йывăçа пĕтĕмĕшпе ӳкерсе кăтартма тăрăшмалла.



14. ӳк. Йывăç.

Кашни йывăçăн хăйён тёрлё форми тата характерё пур. Пёр йывăççем те, калăпăр, хурăнсем пурте пёр формăллă пулмаççё. Пёрисем лăпсăркка, илемсёр, теприсем питё тирпейлё, яштака та илемлё пулаççё. Художникăн çашни япалан формипе характерне питё хытă сăнамалла. Çавăн чухне çеç тёрёс, чăн-чăн япала пек ўкерме пулать.

Халё пёр йывăç, сăмахран, хурăн ўкерёпёр. Унăн характерёпе формине сăнаса пёлнё тăрăх малтан унăн вуллипе тураттисене палăртса хурăпăр. Ун хыççăн вара пире курăнакан малти ик-виçё туратăн çулçисене тёплёнрех ўкерёпёр. Йывăç ўкерчёкне те, объемлăхне кăтартас тесен, штрихлеме пулать.

Нумай йывăççене пёрле ўкернё чухне малти йывăççене çеç тёплён илемлетсе ўкермелле. Хыçалтан курăнакан йывăççёсене контурлă линисемпе çеç ўкерсен те юрать. Йёркерен, калăпăр, çулăн пёр енёпе лартса тухнă йывăççене ўкернё чух пирён умри йывăçё пире пуринчен те çўллё пек, ыттисем, мён малалла кайнăçем, пёчёкленсе пынă пек туйăнса курăнаççё. Ку ёнтё вăл пире перспективла курăнни пулать.

Пейзажсене перопа ўкерни питё усăллă. Ўкерчёке малтан карандашпа çăмăллăн ўкерсе тухса, ун хыççăн перопа ўкереççё. Ăна



15 ӳк. Хыр. *И. Шишкин* художник ӳкерчӗкӗ.

малтан карандашпа ӳкерсе тӑмасӑрах тӳрех перопа та ӳкерме пулать, анчах та вӑл сиӗншӗн малтанлӑха йывӑртарах пулӗ.

Пейзажсене карандашпа тата перопа ӳкернисӗр пусне тата кистьпе те ӳкерме пулать. Кусемсӗр пуҫне тата пӗр вӑхӑтрах перопа та, шӗветнӗ тушпа та питӗ аван ӳкерме пулать.

Кун пек ӳкерес пулсан, малтан пейзажа карандашпа паллӑ туса тухаҫҫӗ, унтан перопа тата шӗвӗ шӗветнӗ тушпа ӳкереҫҫӗ. Ку типнӗ хыҫҫӑн вара тӗттӗм вырӑнсене ҫӑрарах шӗветнӗ тушпа сӑрласа тухаҫҫӗ. Ҫакна тунӑ чухне тӗттӗм вырӑнсене пур ҫӗртине те пӗр пек тумалла мар. Япаласем пире мӗн чул сывӑхрах, ҫавӑн чул вӗсен тӗттӗм ӳкнӗ вырӑнӗсем тарӑнрах, тӗттӗмрех курӑнаҫҫӗ; мӗн чул инҫетре ҫавӑн чул ҫутӑрах пулаҫҫӗ. Шӗветнӗ тушпа ӳкернӗ чухне эпир ӳкерчӗкре пӗлӗтпе ҫӗр тӗсӗсене те аван уйӑрса кӑтартма пултаратпӑр. Пӗлӗт ҫӗртен ҫутӑрах пулать. Шурӑ пӗлӗтсене е пӗлӗтсӗр куна ӳкернӗ чухне пӗлӗт вырӑнне шурӑ хута сӑрламасӑр та хӑварма пулать. Хура пӗлӗт таткисене ӳкерсе сӑрланӑ чухне вӗсене ытлашши хура тӗслӗ тӑвассинчен сыхланмалла.

Халӗ тата пӗр-ик сӑмах шыва сӑнласа кӑтартасси ҫинчен калаҫар. Шывпа пӗлӗт тӗсӗсене танлаштарса пӑхӑр. Хӗвел пӑхнӑ кун шыв пӗлӗтрен тӗттӗмрех пулать. Кӑнтӑрла

тĕлĕнче (хĕвел çӳлте пулнăран) шыв çинче сыран хĕрринчи тĕмескесенчен е йывăççенчен ӳкекен мĕлкесем пулмаççĕ. Ун чух шывра чи тĕттĕм вырăнсем малта пулаççĕ. Шыв пирĕнтен мĕн чухлĕ инçетре, çавăн чухлĕ унăн тĕсĕ çутăрах пулать. Шыв çине ирхине е каçхине пăхсан унăн тĕсĕ самаях улшăнать. Ун чух шыв çине сыран хĕрри е йывăç мĕлкисем ӳкеççĕ. Хĕвел мĕн чухлĕ горизонта çывăхра, çавăн чухлĕ мĕлкесем вăрăммăн курăнаççĕ. Шыв çинче хумсем пулсан, вĕсенчен те мĕлкесем пулаççĕ. Хум мĕлкисене ӳкернĕ чух çывăхрисене шултăрарах, инçетрисене вĕтĕ-вĕтĕ туса пыраççĕ.

Пуринчен ытла пейзажсене сăрсемпе ӳкерни аван. Сăрсемпе ӳкерес тĕлĕшпе шĕветнĕ тушпа ӳкермелли техника пире питĕ пулăшать.

Ирĕкри япаласене (пейзажсене, т. ыт. те) сăрсемпе ӳкерес пулсан, вĕсене хăвăрт ӳкерсе пĕтерни кирлĕ. Мĕншĕн тесен, кăнтăр çутти улшăннă май, япаласен тĕсĕсем те улшăнаççĕ, сăмахран, мĕлкесем улшăнни те ӳкерчĕке самаях урăхлатать.

Кăнтăрла тĕлĕнче ӳкерчĕке пĕр сехет çурă хушшинче пĕтерме тăрăшмалла. Каçалапа тата та хăвăртрах ӳкерме кирлĕ. Çавăнпа та кун пек чух ӳкерчĕксене пĕчĕкрех тумалла.

Пейзажсене сăрсемпе ӳкерме пире ытла-

рах тĕслĕ сăрсем кирлĕ пулаççĕ. Ку тĕлĕшпе ытти сăрсемпе пĕрле прусская-синяяпа гуммигут (çутă-сарă) тĕслисем те пулин кирлех пулаççĕ. Гуммигут вăл курăксемпе йывăççем çинчи çутă вырăнсене ӳкерме аван. Прусская-синяяпа пĕлĕт ӳкернĕ чух усă кураççĕ. Ку сăрсене пĕрле хутăштарса сăрласан та питĕ илемлĕ тĕс пулать.

Сăрсемпе ĕçлес техника пейзажсем ӳкернĕ чухне те натюрморт ӳкернĕ чухнехи пекех пулмалла. Çапах та пейзажсене пуçласа сăрсемпе ӳкерме тытăнакансен час-часах çакăн пек йăнăшсем пулаççĕ. Пĕрремĕшĕ — симĕс тĕслĕ япаласене (курăк, йывăç) пурне те пĕр пекех ӳкерни, иккĕмĕш—çуртсене, йывăç вуллисене пурне те пĕр тĕслĕ ӳкерни. Кусем ĕнтĕ пысăк йăнăшсемех пулса тăраççĕ. Мĕншĕн тесен, йывăç çулçисем те пурте пĕр тĕслĕ пулмаççĕ. Кашни йывăçăн хăйне евĕр уйрăм тĕс пур. Çавăн пекех курăксенче те. Пейзажсене сăрсеме ӳкернĕ чухне çакна яланах асра тытмалла.

Ку таранччен эпир çуллахи пейзажсем çинчен çеç калаçрăмăр. Халĕ тата хĕллехи пейзажсемпе паллашар-ха.

Паллах, хĕллехи вăхăтра ирĕкре пейзажсем ӳкерме килĕшекенсем сахал пулĕç. Çапах та чӳрече витĕр пăхса ӳкерме кашниех пултарать.

Хăнăхман куç юр çинчи тĕрлĕрен тĕслĕхсене часах тĕплĕн уйăрса илеймест. Ăна юр шуррăн, пĕлĕт кăваккăн çеç курăнать.Уншăн пулсан вĕсенче урăх нимĕнле тĕс те çук пек туйăнма пултарать. Анчах та тĕрĕссипе вăл ун пек мар. Çутçанталăкра çара шурă е çара хура тĕссем çук, вĕсем хура е шурă евĕр (относительно) çеç курăнаççĕ. Çавăнпа та сăрсемпе ўкернĕ ўкерчĕкре юр вырăнне шурă хута сăрламасăр хăварни пысăк йăнăш туни пулать.

Хĕллехи пейзаж çине тĕрлĕ вăхăтсенче сăнаса пăхсан, эсир пейзаж кашнинчех пĕтĕмĕшпе урăхла курăннине асăрхама пултаратăр. Кăнтăрла тĕлĕнче юр çинче кăвакрах тĕссем нумай. Хĕвел аннă вăхăтра хăмăр кăвакрах тĕс çине çутă кăвак (фиолетовăй) тĕс витĕнет.

Хĕллехи пейзаж çине кăнтăрла сăнаса пăхсан, эпир юр çинче чи çутă вырăнсем—муклашкасем, çуна е ура вырăнĕсемпе купаланса выртакан вырăнсем пулнине куратпăр. Ăна пуринчен ытла хĕвел аякра е хыçалта чухне асăрхама пулать.

Çапла ĕнтĕ, юр çинчи çутта е тĕксĕм вырăнсене ўкерчĕкре кăтартас пулсан, эпир çакăн пек тăватпăр: малтан питĕ шĕвĕ ирĕлтерне кăвак сăрпа, чи çутă вырăнсене сăрламасăр хăварса, юр ўкерес вырăна



16 ўк. Çуллă сăрпа ўкернĕ. *И. Левитан* худ. картини.

пĕтĕмĕшпе сăрласа тухатпăр. Вăл типнĕ хыççăн вара кăвакрах тата хăмăр-кăвакрах тĕссемпе тĕксĕм вырăнсене сăрласа, мĕлкесем туса тухатпăр. Хĕвелсĕр кун пĕлĕте шупка кăвак тĕспе сăрлаççĕ; юра та çавăн пекех, анчах питĕ шĕвĕ ирĕлтерсе сăрлаççĕ.

Хĕллехи пейзажăн илемлĕхне кӳме пейзажа çуртсемпе пĕрле ӳкерсен аван. Кăвак пĕлĕт е юр тĕсĕсем тĕксĕм çуртсем çумĕнче питĕ илемлĕн курăнаççĕ.

Пейзажсене çуллахи вăхăтра пуринчен ытла выльăхсемпе пĕрле (лашасем, ĕнесем, сыснасем тата ыт. те) ӳкерсен аван. Ку тĕлĕшпе каллех ĕнтĕ малтан выльăхсене уйрăм ӳкерме вĕренни кирлĕ. Выльăхсенчен сыснасене ӳкерме çăмăлтарах. Малтанлăха пейзажсене ӳкерме çăмăл выльăхсемпе пĕрле ӳкерме юрать.

## ПОРТРЕТ ТАТА ÇЫН КĔЛЕТКИНЕ ӲКЕРЕССИ

Малтан эпир портрет ӳкерессипе паллашăпăр. Кашни çын пит-куçĕнче харпăр хăй тĕрлĕ уйрăмлăх пур. Пĕрин çамки пысăк, теприн куççĕсем пĕчĕк, виççĕмĕшĕн тути çӳхе тата ыт. те. Кунсăр пуçне, пĕрин пичĕ хĕрлĕ, теприн хĕвел çинче саралса кайнă — хăмăр, виççĕмĕшĕн шап-шурă пулать.

Юлашкинчен тата китай çыннин, негрӑн, Европа çыннин, грузинӑн, тутарӑн пит-куçӗсене илер. Вӗсен кашниннех харпӑр хӑй евӗр пит-куç характерӗ пур.

Эпир малтанлӑха пит-куçа тӗрӗсрех ӳкерминчен, пит-куçӑн хӑшпӗр пропорцийӗсемпе паллашнинчен тытӑнӑпӑр.

Хӑвӑр юлташсене кама та пулин ларса ӳкерттерме ыйтӑр. Çаврака пит-куçлӑ, тӳрӗ сӑмсаллӑ çын пулсан аван. Хӑвӑр ӳкерттерекене хирӗç, ӑна тӳрӗ пӑхса ӳкермелле, ларӑр. Хут листи çине малтан пуçӑн пӗтӗм формине, унтан куçсене, тутана палӑртса хурӑр. Кун пек палӑртса хуна пуç формине — тӑрӑхла ункӑна — варри тӗлӗнчен çӳлтен аялалла пӗр линипе икӗ пая уйӑрса хурӑр. Ун хыççӑн, хӑш тӗлтен çӳç пӗтсе çамка пуçланса кайнине, сӑмсаран мӗнле хушӑра тута вырнаçнине астуса, çав варринчен турт-са хунӑ лини çине паллӑ туса хурӑр. Унтан сӑмсан çӳлти туни вӗçӗнчен кӑшт çӳлерех, тӑрӑхла ункӑна урлӑ лини туса тухӑр. Ун çине куç харшисене палӑртса хурӑр. Куç харшисене палӑртнӑ чух вӗсен тӑршшӗне шутласа илӗр. Куç харшисенчен куçсем мӗнле хушӑра вырнаçнине те палӑртса хурӑр. Халӗ тута сарлакӑшӗпе хулӑнӑшне шутласа илсе паллӑ тӑвӑр. Кун хыççӑн вара кӑлхасене палӑртмалли çеç юлать. Лайӑхрах



17-мӗш ӳкерчӗк.

сӑнаса пӑхсан, эсир хӑлхасен ҫӳлти вӗҫӗсем куҫ харшисен линийӗ тӗлӗнчерех-хине, хӑлхасен аялти вӗҫӗсем сӑмсан аялти вӗҫӗ тӗлӗнче-реххине куратӑр. Эсир ку лини ҫинче ҫамка, сӑмса, питӗн аялти пайне пропорци тӗлӗшпе тӗрӗс шутласа илсе паллӑ турӑр пулсан, сирӗн вӑл лини 3,5 пая валеҫӗнмелле. Ку шутра сӑмса, ҫамка тата сӑмсаран аялти пайӗ пӗр виҫе пулнине куратӑр. Пуҫ тӳпинчен ҫамка пуҫланнӑ (ҫӳҫ пӗтнӗ) ҫӗре ҫитиччен ҫур сӑмса виҫи (кӑшт ытларах та) пулать. Кунсӑр пуҫне эсир тата ҫакна асӑрхама пултаратӑр: куҫ харши тӗлӗнчен пит урлӑ туртнӑ лини пилӗк пая пайланать. Вӗсенчен пӗри — варринчи — сӑмса тунине, иккӗшӗ куҫ харшисене, тата иккӗшӗ куҫ аяккисене пайланаҫҫӗ.

Халӗ тата ҫӑвар виҫи ҫинчен калас пулать. Вӑтам ҫӑвар сарлакӑшӗ сӑмса сарлакӑш чухлӗ

пулмалла теççĕ. Анчах та ку тĕрĕсех мар, çăвар сăмсаран сарлакарах пулать. Калас пулать, çапла шутлани вăл çын пит-куçĕн пропорцийĕсене вăтам шутпа (за основу) илни пулать. Ку пропорцисем улшăнма та пултараççĕ, мĕншĕн тесен, кашни çыннăн сăн-сăпачĕ расна. Сăмахран, шакла пуçлă вată старикĕн çамки пысăкланса, питĕн аялти пайĕсем пĕчĕкленсе курăнаççĕ. Ку вăл шăлсем ўксе пĕтнипе çўлти шăлтуни шала кĕрсе кайса, янах малалла тухса тăнинчен килет.

Халĕ ку пуç ўкерчĕкне, ăна ўкерттерекенĕ евĕр тума тăрăшмасăрах, малалла ўкерсе пăхар. Сăмса, куçсене, çăвар, янах, хăлхасене ўкерĕпĕр. Эпир сăмса, куçсем, хăлхасем, кашни çыннăн тĕрлĕрен пулаççĕ тесе малтанах каланăччĕ. Сăмахран, эпир ўкерекен çынăн сăмси тўрĕ, тейĕпĕр.

Сăмсана мĕнле ўкермелле-ха? Ăна çакăн пек ўкерме пулать: малтан, унăн варринчи пайне, унтан, сăмса шăтăкĕсене. Сăмсана тўрĕ линисемпе лаптăкла ўкермелле мар, ун пек вăл çыпăçтарса лартнă пек пулма пултарать. Сăмсан çутă енне тĕплĕнех ўкермесен те юрать. Ăна объемлă туса, унăн формине парас пулсан, тĕксĕм енне штрихлесе те ўкерме пулать.

Куçсене ўкернĕ чухне вĕсен сарлакăшне, тăршшĕне тĕрĕс шутласа илни кирлĕ. Вĕ-

сен виçисене тĕрĕс шутласа, тăрăхла ункăсем тунă хыççăн тин куç шăрçисене е тата куççен ытти пайĕсене ӳкерме тытăнас пулать.

Çăвара ӳкерме тăрăхла ункă е пуç варри тĕлĕнчен тӳрĕ туртса хунă лини çумне малтан тутан çӳлти, унтан аялти хĕррине ӳкернинчен тытăнмалла. Тутаран кăшт çӳлерех те (сăмса айĕ) тата аяларах та (янах çийĕ) пĕчĕк путăксем пулаççĕ. Вĕсене штрихсемпе штрихлесе тĕксĕмлетсе кăтартма пулать.

Хăлхасем тăрăхларах çур ункă евĕр пулса тăраççĕ. Вĕсен çӳлти пайĕсем аялтинчен сарлакарах. Вĕсене малтан пĕтĕмĕшпе контурлă линисемпе ӳкерсе, унтан вĕсен шалти пайĕсене ӳкермелле.

Çапла ĕнтĕ, çын пит-куçĕн пĕтĕмĕш контурĕ пулчĕ те. Кун хыççăн вара пит-куçри ытти вак-тĕвексене, пит-куçри ытти характерлă линисене, çӳçе тĕплĕн ӳкерме тытăнма та пулать.

Халĕ тата пуçа (пит-куçа) аяккинчен пăхса (профиль) ӳкерессипе кăштах паллашăпăр.

Ку майпа ӳкернĕ чухне те пит-куçăн пропорциллĕ валеçӳсем çав малтан хирĕç пăхса ӳкернĕ чухнехисемех юлаççĕ. Анчах ку майпа ӳкернĕ чухне пуçăн форми пĕтĕмĕшпех улшăнать. 18-мĕш ӳкерчĕк çинче эсир вăл епле улшăннине аванах куратăр. Çапла ĕнтĕ, çамка,

сӑмса, янах формисем малтанхинчен пӗтӗмӗшпех улшӑнчӗҫ.

Малтан, хирӗҫ пӑхса ӳкернӗ чухне, эпир тӑрӑхла ункӑран ӳкерме тытӑннӑччӗ. Халӗ мӗнрен ӳкерме тытӑнмалла-ха?

Чи малтан каллех пуҫ формине пӗтӗмӗшпе контурла линисемпе палӑртса хунинчен тытӑнмалла. Тӗплӗн сӑнаса пӑхсан, ку майпа эпир ӗнсе хыҫӗ янахран ҫӳлерех хине куратпӑр. Ҫамкапа сӑмса профилӗ пӗчӗк кӗтес туса хурать. Сӑмса вӗҫӗнчен пӑртак шаларах пит-куҫӑн аялти пайӗ (янах) пуҫланса каять. Ҫапла ентӗ, 18-мӗш ӳкерчӗк тӑрӑх, эпир пуҫа профильлӗ майпа мӗнле ӳкерессине аванах ӑнланса илме пултаратпӑр.



18-мӗш ӳкерчӗк.

Акӑ тата 20-мӗш ӳкерчӗке сӑнаса пӑхар. Ку ӳкерчӗкре пуҫа 3/4 майлӑ чалӑшларах



19 ӳк. Пуҫа темиҫе майлӑ пӑхса ӳкернӗ чухнехи конструкци. *Г. Гольбейн* художник ӳкерчӗкӗ.

пӑхса ӳкернине кӑтартнӑ. Ку майпа ӳкернӗ чухне те малтан пуҫа пӗтӗмӗшпе контурлӑ линисемпе палӑртса хунинченех тытӑннӑ. Ҫапла ӗнтӗ пуҫа, пит-куҫа кирек мӗнле майлӑ ӳкерес пулсан та, ӑна малтан пӗтӗмӗшпе контурлӑ линисемпе паллӑ туса хунинчен тытӑнмалла. Кун пек палӑртса хунӑ хыҫҫӑн вара пит-куҫӑн ытти пайӗсене, тӗрӗс шутласа илсе, вырнаҫтарса хумалла, вӗсене тӗплӗн ӳкерме тытӑнмалла.

Анчах ӳкерме вӗренекенсем ҫынна пӑхса ӳкернӗ чухне час-часах ҫакӑн пек йӑнӑшсем



20 ӳк. Çынӑн пуçне $^3/_4$ майлӑ чалӑштарса ӳкерни.

тӑваççӗ. Вӗсем яланах ӳкерчӗке (портрета) пӑхса ӳкернӗ çынӗ евӗр тӑвасшӑн тӑрӑшса, е пуçа пӗтӗмӗшпе „пӑхма" пӗлмесӗр е пит-куçӑн пӗр пайне тепӗр пайӗпе танлаштарса пӑхмасӑр, чи малтан пит-куçри вак-тӗвексене ӳкерме тытӑнаççӗ. Çавӑнпа та вара вӗсен ӳкерчӗкӗсенче час-часах çыннӑн пӗр куçӗ пӗчӗк, тепри пысӑк, чалӑш, е сӑмса ытлашши пӗчӗк тата ытти йӑнӑшсем те пулаççӗ.



21 ўк. Пĕр ҫынпах темиҫе майлă лартса ўкерни.

Эпир ку кĕнекере пуçăн анатомийĕ çинчен
тĕплĕнех каласа пани питех кирлĕ те мар
тулĕ тетпĕр. Çавăнпа та вăл тĕлĕшпе пĕр-ик
ӳкерчĕк çеç пичетлетпĕр.



22 ӳк. Çыннăн пит-куçĕнче мышцăсем мĕнле
вырнаçса тăнине кăтартнă.

Пуҫа, пит-куҫа ӳкернӗ чухне яланах ҫакна асра тытни кирлӗ: пит-куҫӑн ҫиелти тирӗ айӗнче мышцӑсем пур. Ҫав мышцӑсем ӗҫлевинчен ӗнтӗ пит-куҫӑн мимики (улшӑнни) килет. Сӑмахран, пит-куҫра кулӑ мышци, куҫ харшисене, ҫӳлти тутана, сӑмса ҫунат-



23 ӳк. Пуҫ шӑмми.
(малтан пӑхсан)

тисене çĕклекен мышцăсем пур. Мышцăсем айĕнче пуç шăмми вырнаçса тăрать. Пуç шăммин форми кашни çыннăн хăй евĕр пулать. Пуç, пит-куç форми çав пуç шăмми форминчен килет. Хăшпĕр çыннăн, сăмахран, ватă çыннăн пуç шăмми питĕ аван палăрса тăрать. Пуçăн анатомийĕпе тĕплĕнрех паллашма шăмăсем, мышцăсем палăрса тăракан çынсене пăхса ӳкерни аван пулăшать.

Анатоми тĕлĕшĕпе ятарласа кăларнă кĕнекесем пулаççĕ. Анчах вĕсене тепĕр чух тупса илме те пулмасть. Çавăнпа та ку тĕлĕшпе эсир шкулсенче нагляднăй пособи вырăнĕн-



24 ӳк. Пуç шăмми (аяккинчен пăхсан).

че тăракан пуç шăммисене те пулин тупса, ăна тĕрлĕрен майлă (хирĕçле, профиль, тата ыт. те) лартса ӳкерсен питĕ аван пулĕччĕ.

Халĕ тата пит-куçăн мимикăри паллăрах выраженисемпе паллашар. Малтанах куç выраженисене илсе пăхăр. Куçсен тĕрлĕрен выраженийĕсем куçсен сарлакăшĕнчен, куç шăрçисем хăш тĕлтинчен килеççĕ. Сăмахран, куçсем хĕсĕк пулсан ывăннине, сывăрас киллине, сын чирлине пĕлтереççĕ. Куçсене чарса пăрахнă пулсан, хăранине, тĕлĕннине кăтартаççĕ. Кунсăр пуçне тата куçсен выраженийĕсем куç харшисем улшăннинчен те килеççĕ. Сăмахран, кулнă чух куç харшисем кăшт çӳлелле хăпараççĕ. Хăранă чух вĕсем тата ытларах çĕкленеççĕ.

Пĕр-ик сăмах çăвар мимики çинчен. Тĕрлĕрен переживанире куçпа пĕрлех тата çăвар та улшăнать. Сăмахран, кулнă чухне тутан çӳлти хĕрри кăшт çĕкленет, çăвар аякалла сарăлать.

Эпир кунта пит-куç выраженин мĕнпур мимики çинчен тĕплĕнех каласа тăмастпăр. Вĕсенчен художнике чи кирли çинчен 22-мĕшĕпе 36-мĕш ӳкерчĕксенче кăтартнă.

Пит-куçăн мимикине пĕлни вăл гримсем тунă чух, портретсем ӳкернĕ чух, пуринчен ытла карикатурăсем ӳкернĕ чух питĕ кирлĕ. Мимикăна тĕплĕн ăнланса илме сынна унăн

шухăш-кăмăлĕ улшăнни вăхăтра сăнаса пăхни питĕ пулăшать.

Çын сăнье ӳкерме вĕреннĕ чухне малтанлăха ку мимика тĕлĕшпе выраженисем пама тăрăшни кирлĕ мар. Ăна тума эсир портретсем ӳкерме вĕренсе çитерехпе хăвăрах ăнланса илетĕр, вăл ун чух сирĕншĕн ытла йывăр задачах та пулмасть.

Портретсене карандашпа, кăмрăкпа, перопа тата ыттипе те ӳкерме пулать. Эпир халĕ портретсене сăрсемпе мĕнле ӳкермелли çинчен кăштах паллашăпăр.

Эпир кашни çын пит-куçĕнче тĕрлĕрен тĕс пулать тевĕччĕ. Портретсем ӳкерме анчах вĕренекенсем яланах пит-куçа кĕренрех тĕслĕ сăрпа пĕтĕмĕшпе сăрласа тухаççĕ те тутасене хĕрлĕ сăрпа сăрласа хураççĕ, куçсене кăвак тăваççĕ, çапла вара ним килĕшӳсĕр ӳкерчĕксем пулса тăраççĕ.

Портретсене сăрсемпе ӳкернĕ чухне чи пĕлме кирли—пĕтĕмĕш тĕсе тупасси, хăш тĕлте мĕнле тĕссем тата хăш тĕлте тĕксĕм вырăнсем кирлине асăрхасси, çапла вара çав вырăнсене тĕрĕс сăрласси пулать.

Çын çамки пит-куçăн ытти вырăнĕсенчен яланах çутăрах, хăлхасем хĕрлĕрех те çутăрах курăнаççĕ.

Портретсене сăрсемпе ӳкернĕ чухне малтан пĕтĕмĕшпе пĕр тĕспе сăрласа тухмалла,




25 ӳк. Çын кӗлеткинчи пропорцисене пуç виçипе илсе кӑтартнӑ.

унтан тĕксĕмрех пулмалли вырăнсене майĕпе тĕксĕмлетсе пымалла. Чи малтан, темиçе тĕслĕ сăрăсемпе ĕçлеме тытăниччен, шĕветнĕ тушпа пуç формине туса кăтартма тăрăшса, çутă е тĕксĕм вырăнсене тĕрĕс ӳкерме вĕренни кирлĕ.

Портретсем чĕрĕ еверлĕ, илемлĕ тухма куç шăрçисем çинче çутăлса тăракан вырăнсене сăрламасăр (шурă) хăварса ӳкерни те чылай пулăшать.

Халĕ çын кĕлеткине ӳкерессипе паллашăпăр. Ку ĕнтĕ чи йывăр ĕç пулса тăрать. Хăвăр юлташусенчен кама та пулин ӳкерттерме ыйтăр. Вара хутăн варри тĕлĕпе тӳрĕ лини туртса хурăр. Куçпа виçсе çав лини çине пĕтĕм кĕлетке çӳлĕшĕнче миçе пуç çӳллĕшĕ вырнаçнине паллă туса хурăр. Ӳссе çитнĕ вăтам пӳллĕ çынсен пĕтĕм кĕлетки çӳллĕшĕ 6—7 пуç çӳллĕшĕ вырнаçать.

Çӳллĕрех çынсен кĕлетки çӳллĕшĕнче 8 пуç çӳллĕшĕ вырăнаçни те пулать. Çын мĕн чул пĕчĕккĕ, çавăн чул ку виçе шучĕ сахал пулать (25-мĕш ӳкерчĕк.) Çӳллĕ çынсен пĕççисем кĕлеткен çӳлти пайĕнчен вăрăмрах пулаççĕ. Тĕрĕс çанçурăмлă арçынсен хулпуççийĕ купарчаран сарлакарах. Хĕрарăм кĕлеткине ӳкернĕ чух эсир хĕрарăмăн хулпуççийĕ купарчаран ансăтараххине асăрхатăр.

Çынăн аллисем хул кăкĕнче сарлакарах пулаççĕ, алă лаппи патнелле çинçелсе пыраççĕ. Пĕçесем те çавăн пекех, пĕçĕ кăкĕнче сарлака, ура лаппинелле çинçелсе пыраççĕ.

Алăсене аялалла тӳрĕ усса ярсан, вĕсем çын çӳллĕшĕнче çур кĕлетке тĕлне-çитеççĕ.

Çын кĕлеткине тумтирпе е кепе-йĕмпе ӳкерне чухне яланах çыннăн кĕлетки кĕпе-йĕмсĕр (çарапакартăн) мĕнле формăллине асра тытмалла. Çын кĕлеткине тумтирпе, кĕпе-йĕмпе ӳкерне чух тумтирĕн, кĕпе-йĕмĕн хуçкаланчăкĕсене çеç шута илсе ӳкерни вăл пысăк йăнăш туни пулать. Шăмăсем, мышцăсем ăçта, мĕнле вырнаçса тăнине тумтир айĕпе кăтартма тăрăшмалла. Çынăн кĕлетки мĕнле тытăнса тăнине (çынăн анатомине) кăштах та пулин пĕлмесĕр çынна тĕрĕс ӳкерме çук.

26 мĕш ӳкерчĕкри çыннăн скелечĕ çине сăнаса пăхăр. Пуç шăммипе таз çурăм шăммипе çыхăнса тăраççĕ. Тазпа тата пĕçĕ шăммипе ура туни шăммисем çыхăнса тăраççĕ.

Кăкăр кĕлеткине лайăхрах сăнаса пăхăр. Унта 12 аякпĕрчи шăмми çурăм шăммипе çыхăнса тăраççĕ. Кăкăр кăшкарĕ варринче кăкăр шăмми пур. Вăл шăмă çумне тата икĕ ключица текен шăмă çыхăнса тăрать. Ку ключицăсемпе лопаткăсенчен алă шăммисем çыхăнса тăраççĕ.



26 ӳк. Ҫыннӑн мышцисемпе шӑммисем.

Халĕ тата пăртак çын кĕлетки хускални (движени) çинчен каласа парар.

Çын хускалнă (ĕçленĕ) чух, çурăм шăмми пĕкĕ пек те авăнать. Унпа пĕрлех тата ключицăсем те хăйсен вырăнĕсене улăштараççĕ. Сăмахран, çын сулахаялла чалăшнă пулсан, çурăм шăмми те сулахаялла авăнать, ключицăсем те аялалла (сулахаялла) анаççĕ.

Анчах та çыннăн кĕлетки хускалнă чух çак шăмăсем анчах мар улшăнаççĕ. Акă, çыннăн кĕлетки утнă, чупнă, йывăр йăтнă чух мĕнле улшăннине сăнаса пăхар. Çын утнă чух унăн кĕлетки кăштах малалла сулăнать. Урасем сарăлаççĕ, çын ун чух пĕр ури çине çеç уртăнса тăрать. Çын утнă чух унăн аллисем урасем утнине хирĕçле сулланаççĕ. Çапла вара çыннăн кĕлетке шăммисем урăхла формă йышăнса тăраççĕ.

Çын кĕлеткинчи кун пек улшăнусем пĕр кĕлетке шăммисенчен çеç мар, мышцăсенчен те килеççĕ. Кун умĕнхи калаçура эпир пуç шăмми мышцăсемпе витĕнсе выртать тенĕччĕ. Çавăн пекех çын кĕлеткин пĕтĕм шăммисем те тĕрлĕрен мышцăсемпе витĕнсе выртаççĕ.

Алăри кĕпе çаннине хул кăкне çити таврăр. Алăн формине малтан аялалла усса ярса, унтан ăна хутлатса пăхăр. Эсир ăна хутлатсан, унăн форми пĕтĕмĕшпех улшăн-

нине куратăр. Сирĕн хул кăкĕ патĕнче муклашка пек мышца хăпарса тăчĕ. Кунта пичетленĕ 26-мĕш ӳкерчĕк ҫинче ҫын кĕлеткинчи паллăрах мышцăсем умран та, хыҫалтан та питĕ аван палăрса тăраҫҫĕ. Эпир кунта вĕсен кашнин ячĕсене тĕплĕн каласа тăмăпăр. Анчах вĕсен формисене питĕ тĕплĕн сăнаса, вĕсем мĕнле вырнаҫса тăнине асăрхаса тăмалла. Мăйри мышцăсем ҫине сăнаса пăхăр-ха. Эсир хăлхасенчен ключицăсемпе ҫыхăнса тăракан мышцăсене асăрхатăр. Кăкăр, хырăм, алă, пĕҫĕсен, ҫурăм мышцисене лайăхрах сăнăр. Эсир ҫакăнта пичетленĕ 26-мĕш ӳкерчĕке темиҫе хут ӳкерсе илсен питĕ аван пулĕччĕ. Вăл сире ҫын кĕлетки епле тытăнса тăнине астуса тăма пулăшĕ.

Халĕ ĕнтĕ эпир паҫăр ӳкерме пуҫланă ӳкерчĕке малалла ӳкерме тытăнăпăр. Хамăр ĕҫре эпир ӳкерекен юлташăн кĕлетки шăммисем, мышцăсем хăш тĕлте мĕнле вырнаҫса тăнине тумтир витĕрех тупса пĕлме тăрăшăпăр. Малтан ҫинҫе линисемпе унăн кĕлетке шăммисем, паллăрах мышцăсем хăш тĕлтине паллă туса тухăр. Унтан вара, вăл шăмăсемпе мышцăсене тупса паллă тунă хыҫҫăн, ун ҫинчи тумтирне, кĕпе-йĕмне ӳкерме те пултаратпăр.

Ӳкернĕ чух пĕр формăна тепĕр формăпа, вĕсен пропорцийĕсене яланах танлаштарса



27 ӳк. Аллӑсене уйрӑммӑн ӳкерни.

ӳкермелле. Çын кӗлеткине пӗтӗмӗшпе пӗр вăхăтра курса ӳкерме тăрăшмалла. Çын кӗлеткин чи паллă формисене ӳкермелле, вактӗвексене ӳкерсе тăма кирлӗ мар.

Çын кӗлеткине ӳкернӗ чухне мӗнле йăнăшсем пулма пултараççӗ.

Анчахрах ӳкерме вӗренекенсем час-часах çын кӗлеткине пропорцисӗр ӳкереççӗ, пуçне ытлашши пӗчӗккӗ е пысăк, е тата аллисене кӗске туса йăнăшсем тăваççӗ. Аллисене, урасене уйрăммăн ӳкерсе хăнăхас пулать.

Çыннăн кӗлетки (çан-çурăмӗ) хуçкаланчăк. Çавăнпа та вăл темиçе майлă та пулма пултарать. Малтанлăха ӳкерме йывăр хусканулла ӳкерчӗксемех ӳкермесен те юрать. Сăмахран, йывăр йăтакансене, вутă çуракансене, утă çулакансене ӳкере-ӳкере хăнăхсан питӗ лайăх пулмалла.

Çыннăн кӗлетки тӗрлӗрен хусканусем тунине яланах сăнамалла. Ку тӗлӗшпе çуллахи вăхăтпа усă курма пулать, çуллахи вăхăтра шыва кӗрекенсем сахал мар вӗт.

Тумтир тăхăннă çын кӗлеткине акварельлӗ сăрсемпе ӳкерессине çинчен каласа тăмастпăр та. Ку тӗлӗшпе çутă теслӗ кӗпе-тумтирлисене, сăмахран, çутă теслӗ тутăр, саппун, кӗпе, кӗрӗк тăханнă çынсене ӳкерме çеç сенме пултаратпăр.

Çынсене çарапакартăн ӳкерессине çинчен



28 ўк. Урасене уйр̆ăммăн ўкерни.

пăртакках чарăнса тăрар. Пит-куç, алăсем, урасем тата хырăм тĕсĕсене сăнаса, пăхăр. Пит-куç, алăсен, урасен тĕсĕсем пуринчен те тĕксĕмреххисем пулаççĕ. Хырăм—пуринчен те çутăраххи пулать. Паллах, çан-çурăмăн нумай тĕслĕхĕ çинчен калани те кирлĕ мар. Çавăн пекех çан-çурăм кашни сыннăн харпăр хăй тĕслĕ пулни çинчен те каламăпăр. Çыннăн çан-çурăмне сăрсемпе ӳкерне чухне çак уйрăмлăхсене яланах асра тытмалла, пур сынна та пĕр тĕслĕ туса ӳкерме кирлĕ мар.

Юлашкинчен тата виç-тăват е ытларах сынсен ушкăнне ӳкересси çинчен пăртак каласа парас тетпĕр.

Çынсене уйрăммăн ӳкерме вĕреннĕ хыççăн темиçе сынна пĕрле ӳкерме те йывăр мар.

Çынсем темиçен пухăнса тăнă е ларнă чухне вĕсем пурте пĕтĕмĕшпех курăнмаççĕ. Çавăнпа та кун пек чух малтисене çеç пĕтĕмĕшпе тĕплĕн ӳкерме лекет. Хыçалта тăракан сынсене ун пек чухне контурлă линисемпе çеç ӳкереççĕ.

Анчах та, кун пек темиçе сынна пĕрле ӳкернĕ чух перспектива правилисене яланах асра тытмалла. Перспектива правилисене тĕрĕс туса ӳкернĕ ӳкерчĕкре малти сынсем пуринчен те пысăкрах пулмалла. Ытти сынсем мĕн чул каярах, çавăн чул пĕчĕкленсе пымалла.



29 ӳк. Ҫынсене ушкӑнпа ӳкерни.

Темиҫе ҫынна пӗрле ӳкернӗ чухне вӗсене кашнине уйӑрммӑн ӳкерсе тӑмалла мар, пурне те пӗр вӑхӑтра пӗтӗм формӑпа палӑртса пырса ӳкермелле. Ҫынсем ушкӑнпа тӑнӑ е ларнӑ чухне вӗсен пӗтӗмӗшле форми е виҫкӗтеслӗ, е тӑваткӑл, е урӑх формӑллӑ пулать. Эпир сире малтанлӑха ик-виҫ ҫынран ытла пӗрле ӳкерме хушмастпӑр. Ҫынсене ушкӑнӗпе ӳкерме вӗренсе ҫитсен, эсир хӑвӑр шутласа тупса, композициллӗ картинӑсем те ӳкерме пултаратӑр.

## ÇУЛЛĂ CĂРСЕМ ТАТА ВĔСЕМПЕ ĔÇЛЕССИ

Çуллă сăрсемпе ĕçлесси çинчен пĕчĕк кĕнекерех ниепле те тĕплĕн каласа пама çук. Çапах та эпир кунта çуллă сăрсемпе ĕçлеме чи малтанлăха мĕн пĕлме кирлине кĕскен те пулин каласа парасшăн.

Картинăсем çырмалли çуллă сăрсем тюбикре пулаççĕ. Малтанлăха пире цинковая белила, кадмий, кармин, ультрамарин пулсан та çитет. Ку сăрсенчен, акварельлĕ сăрсене хутăштарса урăх тĕс тунă пекех, пĕр тĕслипе тепĕр тĕслине хутăштарса, темиçе тĕслĕ те тума пултаратпăр.

Çуллă сăрсене шĕветме ятарласа тунă лаксем, сиккативсем пулаççĕ. Сăмахран, петроль, скипидар. Кусене тупаймасан, кантăр çăвĕпе е йĕтĕн, хĕвелçаврăнăш çăвĕсемпе те усă курма пулать. Анчах ку çусемпе шĕветсен çуллă сăр хăйĕн пахалăхне чылаях çухатать, тĕксĕмленет, е ытлашши шĕветсен сарăлса каякан пулать тата типнĕ хыççăн пĕркеленет.

Çуллă сăрсемпе пуринчен ытла грунтланă пир çине çыраççĕ. Кунсăр пуçне тата фанер, тимĕр листи, картон çине те çырма пулать. Пир, фанер е картон çине çырас пулсан, вĕсене малтан лайăх грунтлас пулать. Грунтлас тени вăл—пире, картона тата фанера хытарас, вĕсен витĕр çуллă сăр сăрхăнса тухмалла мар тăвас тени пулать. Ыгларах уса куракан е туса хатĕрлеме çăмăлтарах грунта çакăн пек япаласенчен тăваççĕ:

| | |
|---|---|
| Желатина | 16 *г* |
| Глицерин | 4 *куб. см* |
| Белила (цинковая) | 100 *г* |
| Шыв | 400 *куб. см* |

Кун пек грунт тумалли белила типĕ, порошокпа пулать.

Кун пек грунта та туса хатĕрлеме май килмесен, шĕвĕрех ирĕлтернĕ столярнăй çилĕмпе те грунтлама пулать.

Çуллă сăрсемпе çырма акварельлĕ сăрсемпе çырмалли кистьсем юрамаççĕ, вĕсем валли урăх йышши хытăрах шăртлă кистьсем кирлĕ пулаççĕ. Вĕсенчен малтанлăха 2,4,6,10,12 №-лĕ кистьсем пулсан та çитет. (1-мĕш ӳкерчĕке пăх.) Çуллă сăрсемпе çырнă хыççăн, кистьсене яланах краççынпа çуса тасатса хурас пулать. Унсăран вĕсем сăрă типсе ларнипе часах пăсăлма пултараççĕ.

Çуллă сăрсене хурса шĕветсе сырма фанера листинчен ятарласа тунă япала — палитра пулсан аван. Ăна тума май килмесен, пĕр-пĕр тимĕр листи çинче те ирĕлтерме пулать.

## ÇИЛĔМЛĔ САРСЕМ ТАТА ВĔСЕМПЕ ĔÇЛЕССИ

Çилĕмлĕ сăрсем типĕ, авăртнă мел (пурă) евĕрлĕ. Вĕсене шĕвĕ ирĕлтерне столярнăй е малярнăй çилĕм шывĕпе шĕветеççĕ. Иквиç' тĕслине хутăштарса урăх тĕс тăвас тесен, вĕсене малтан кашни тĕсне уйрăммăн чӳлмек е консерв банки çинче шĕветсе хутăштараççĕ. Çилĕмлĕ сăрсемпе ĕçлеме çуллă сăрсемпе ĕçлемелли кистьсемех юраççĕ. Пысăкрах япаласене сăрлас е çырас пулсан, маляр кистĕсемпе усă курас пулать.

Çилĕмлĕ сăрсемпе хут, пир, фанер тата ытти япаласем çинче те çырма пулать. Кирек мĕн çине çырас пулсан та, ăна малтан шĕвĕ çилĕмпе шĕветнĕ мелпа (пурăпа) грунтлас пулать.

Çилĕмлĕ сăрсемпе пуринчен ытла çуртсене уявсенче илемлетнĕ чухне е клубсенче сценăсене декорациленĕ чухне ĕçлеççĕ. Çилĕмлĕ сăрсемпе ĕçленĕ чухне ăна яланах примус е вучах çинче ăшăтса ирĕлтерсе

тăрас пулать. Шăнса çăралса ларнă сăрпа çырма юрамасть, вăл хăпăнса ӳкме пултарать. Çавăнпа çилĕмлĕ сăрсене яланах вĕри шывпа ирĕлтереççĕ.

Çилĕмлĕ сăрсемпе ĕçленĕ чух йăнăш тунине çийĕнчех шывпа çуса ярса (сăмахран, пир çинче ĕçленĕ чух, лозунгсем çырнă чух) юсаççĕ. Йывăç е ытти япаласем çинче ĕçленĕ чух тунă йăнăша тӳрлетес пулсан, ӳкерчĕке типĕтес пулать, вара çавăн çинех тепĕр хут тӳрлетсе çырас пулать.

---

# *ИККĔМĔШ ПАЙĔ.*

## КЛУБСЕНЕ, ВУЛАВ ÇУРЧĔСЕНЕ ТАТА ШКУЛСЕНЕ ИЛЕМЛЕТЕССИ

Уявсенче клубсене, вулав çурчĕсене, шкулсене тата ыт. те пуринчен ытла лозунгсемпе, портретсемпе илемлетеççĕ. Хăшпĕр лозунгсем çине пăхсан, вĕсем куçа илемлĕн курăнса каяççĕ, вĕсене вара вулас килет, вĕсене часах вуласа илме те пулать. Анчах тепĕр лозунгсем çине пăхсан, вĕсем килĕшӳсĕррине часах асăрхама пулать, сăмахсене сыпăксем тăрăх çеç вуласа ăнланса илме пулать. Ку ĕнтĕ, паллах, лозунгсене çырма пĕлнипе пĕлменнинчен килет.

Лозунгсем илемлĕ, часах вуласа илмелле пулччăр тесен, пуринчен ытла вĕсене вулама çăмăл шрифтсемпе çырмалла. Кун пек шрифтсенчен илемлĕреххисем тӳрĕ, квадратлă е тата саспаллисен кĕтесĕсене çавракалатса çырнă шрифтсем пулаççĕ (30-мĕш ӳкерчĕк).

**АБВГДЕЖМ**

***АБВГ* абе*25***

30-мĕш ӳкерчĕк.

Лозунгсене çырма тытăниччен малтан хĕрлĕ хăмач е хут çине самахсене йĕркесене пайласа, саспаллисен виçисене тĕрĕс палăртса хуни кирлĕ. Саспаллисен виçисене шутласа илнĕ чух вĕсене ытлашши çӳллĕ е сарлака тумалла мар. Вĕсен хушшисем пурин те пĕр пекех пулмалла. Саспаллисен сарлакăшне валеçсе паллă туна чух М, Ш, Ю, Ж, Щ, Ф, Ы саспаллисен сарлакăшне ытти саспаллисенчен сарлакарах тумалла. Т, Г, Е, Ĕ, С, Ç, саспаллисен сарлакăшне ансăртарах хăварсан та юрать (30-мĕш ӳкерчĕке пăх).

Лозунгсен илемлĕхĕ тата вĕсене мĕнле тĕслĕ хут çине мĕнле тĕслĕ сăрсемпе çырниччен те килет. Сăмахран хĕрлĕ çине шурă е сарă, тĕксĕм япаласем çине çутă, çутă япаласем çине тĕксĕм сăрсемпе çырсан илемлĕ тухать. Кунсăр пуçне тата лозунг-

сене сахал йӗркеллӗ туса ҫырма тӑрӑшмалла. Сӑмахран, пӗр хӗрлӗ хӑмач сарлакӑшне виҫӗ йӗркерен ытла ҫырни кирлӗ мар. Лозунгсене ҫилӗмлӗ сӑрсемпе ҫырмалла. Хӗрлӗ хӑмач е пир ҫине ҫилӗмлӗ сӑрсемпе ҫырнӑ лозунгсем тусанпа, пылчӑкпа варалансан е кивелсен, вӗсене ҫуса тасатса ҫӗнӗрен ҫырма та пулать. Ҫилӗмлӗ сӑрсемпе хут ҫине те ҫыраҫҫӗ. Ҫырасса ҫуллӑ сӑрсемпе ӗҫлемелли кистьсемпе ҫырмалла.

Уявсенче лозунгсемсӗр пуҫне тата яланах портретсене, плакатсене пысӑклатса ӳкерме лекет. Вӗсене клетка тӑрӑх пысӑклатса ӳкерме ҫӑмӑл. Кун пек чухне портрета е плаката тӳрӗ линисемпе пӗр пек тӳркӗтеслӗ клеткӑсене пайлаҫҫӗ. Унтан, пысӑклатса ӳкерес хут е ытти япала ҫине те ҫавӑн чухлӗ пысӑклатнӑ клеткӑсем туса тухаҫҫӗ. Портрета е плаката пысӑклатса ӳкернӗ чухне, улшӑнса каясран, клеткӑсене номерлесе тухаҫҫӗ. Малтан портрета е плаката контурлӑ линисемпе йӗрлесе тухаҫҫӗ, унтан, тӗрӗс пысӑклатса куҫарнине тӗрӗсленӗ хыҫҫӑн, кирлине пӗтӗмӗшпех ӳкерсе тухаҫҫӗ.

Портретсене шурӑ пир ҫине хура сӑрпа пысӑклатса ӳкерсен аван. Кистьсемпе аван ӗҫлеме вӗренсен, портретсене фото-ӳкерчӗксенчен те питӗ илемлӗн пысӑклатса ӳкерме пулать. Уявсенче кун пек пысӑклатса ӳкернӗ



31-ӳк. Пĕчĕк ӳкерчĕке пысăклатса ӳкересси.

ик-виç портрета, ик-виç илемлĕ çырнă лозунга тата виç-тăват ялава лайăх вырнаçтарса çапсан, ялсенчи клубпа шкулсене тулашĕнчен çителĕклĕ таран илемлетнĕ теме те пулать.




32 ўк. Клуб. 1—2 вырăна лозунгсем вырнаçтармалла, 3, 4, 5 вырăнсене портретсем çакмалла.

## ДЕКОРАЦИ ТĂВАССИ

Ялти клубсенче спектакльсем лартнă чух яланах декораци тума çăмăлтарах пьесăсем суйласа илме тăрăшаççĕ, е декораци тума кирлĕ пьесăна та декорацисĕрех выляса параççĕ. Ку ĕнтĕ, паллах, ялсенчи клубсенче художниксем çуккинчен, çавăн пекех тата

декораци тума материалсем ҫителĕксĕр пулнинчен килет. Анчах кирек мĕнле пьесăна та унта кăтартнă декорацине выляса парсан авантарах. Мĕншĕн тесен, декораци пьесăн содержанине тĕрĕс ăнланса илме пулăшать. Ҫавăнпа та эпир ялти клубсенче тума ҫăмăлтарах, тата материалсем сахалтарах кирлĕ декорацисене тăвассипе те пулин паллаштарас тетпĕр.

Пьесăсенче час-часах ялти е хулари ҫуртсен декорацине тума лекет. Паллах ĕнтĕ, кун пек чух клубра малтан тунă сценăпа та усă курма пулать. Анчах кашни пьесăрах пĕр декорацине усă курни куракансене часах йăлăхтарса ҫитерет тата вăл кашни пьеса валли юрăхлă пулма та пултараймасть.

Пӳлĕмсене тума чи ҫăмăлтарах майсенчен пĕри вăл щитсемпе е ширмăсемпе усă курни пулать. Кун пек щитсене тума та йывăр мар. Вĕсене тăвас пулсан, 100 $\times$ 150 *см* сарлакăш, 2 е 2,5 *м* ҫӳллĕш йывăҫран тунă подрамник ҫине фанер хăми е пир (кирек мĕнле кивĕ пир те юрать) ҫакмалла. Пĕр икĕ щитĕнче чӳрече вырăнĕ хăварса чӳрече рамкисем вырнаҫтармалла, тепĕр щитĕнче алăк тумалла. Щитсене ҫиелтен шпалер ҫыпăҫтарнă евĕр, пĕренеллĕ пӳлĕм стенисем евĕрлĕ туса ҫилĕмлĕ сăрсемпе сăрламалла.

Сăрласса икĕ енчен те сăрлама пулать. Ун пек чух икĕ енне икĕ тĕслĕ сăрлама пулать. Çакăн пек тунă 4—5 щитсене темиçе майлă вырнаçтарса лартнипе кашнинчех урăхла пÿлĕм декорацийĕ тума пулать, вырнаçтарса лартнă чух та вăхăт нумай иртмест.



33 ўк. Щитсемпе декораци тунипе кăтартнă.

Çилĕмлĕ сăрсемпе пĕрре сăрланă щитсем вараланса пĕтсен е урăхла сăрлама кирлĕ пулсан, çав щитсем çинех тепĕр хут сăрлама пулать. Щитсене фанертан тунă пулсан, кивĕ сăрне шывпа çуса тасатсан авантарах.

Декорацире вăрман, килхушши тăвас пулсан, çуллахи вăхăтра сцена çине кирек мĕнле йывăç тураттиссе те лартма пулать. Хĕллехи вăхăтра çуллахи декорацие тăвас пулсан, чăрăш е хыр тураттисемпе декораци тăваççĕ.

Кирек мĕнле спектакль валли декораци тăвас пулсан та пьесăна малтан вуласа тухас пулать. Пьесăра кăтартса панă тăрăх, пулас декорацин эскизĕсене акварельлĕ сăрсемпе хут çине туса хумалла. Хатĕр эскиссем тăрăх декораци тума çăмăл.

Декорацире пӳлĕмсем тунă чух тата ширмăсемпе те усă курма пулать. Ширмăна кирек мĕнле майлă та лартма пулать. Вăл ĕçе татах та çăмăллатать.

## ДИАГРАММĂСЕМ ТĂВАССИ

Диаграммăсене час-часах тӳрĕ линиллĕ юпасемпе çеç тăваççĕ. Анчах та кун пек диаграммăсен илемĕ сахал. Диаграммăсем илемлĕрех пулччăр тесен, вĕсене ӳкерчĕксемпе тума пулать. Сăмахран, диаграммăра колхоз çĕрĕсем çинче тырпул туса илесси çулран çул ӳссе пынине кăтартмалла. Кун пек чух тӳрĕ линиллĕ юпасем вырăнне кĕлтесем е тырă тултарнă михĕсем ӳкерме пулать. Тырă тухăçлăхĕ ӳссе пынине кăтартнă

май кĕлтисене пысăкрах, е миххисене ытларах туса ӳкермелле. Вăл ӳкерчĕксем айне вара цифрăсене çырас пулать. Цифрисене ӳкерчĕксем çинех те çырма пулать. Анчах ун пек чух вăл вырăна шурă хăварса е урăх тĕслĕ сăрсемпе палăрмалларах туса çырмалла.

Диаграммăсем пурте пĕр евĕрлĕ ан пулччăр тесен, хăшпĕрисене урăхла, ӳкерчĕклĕ фон çине тума пулать. Кун пек диаграммăна çапла тумалла. Калăпăр, сирĕн колхозра фермăсем ӳссе пынине кăтартмалла. Эсир чи малтан пĕр-пĕр кивĕ хаçат е кирлĕ мар хут çине фермăри çуртсен силуэтне касса кăларăр. Унтан вăл силуэта диаграмма ӳкермелли хут çине хурăр та, хăвăра кирлĕ тĕслĕ сăрă ирĕлтернĕ шывпа пульверизатор витĕр пĕрĕхтерĕр. Хут çине пĕрĕхсе тунă силуэчĕ типсен вăл силуэтлă фон çине вара урăх тĕслĕ сăрпа тӳрĕ юпаллă е линиллĕ диаграмма тусан та илемлĕ пулать.

Çавăн пекех тата тепĕр чух силуэт вырăнне лайăх ӳкерчĕкех те тума пулать. Анчах кун пек диаграммăсене тума вăхăт нумайтарах кирлĕ. Вĕсене хăвăртрах тăвас тесен тата тепĕр майпа — кивĕ журналсенчен касса илнĕ ӳкерчĕксемпе усă курма пулать. Ăна çапла тумалла: пĕр-пĕр кивĕ журнал çинчен хăвăра кирлĕ ӳкерчĕке касса илетĕр.

Вара ăна илемлĕрех пултăр тесен çавраш-каллă туса е урăхла майпа касса кăларса, шур хут çине çыпăçтаратăр. Диаграммăри цифрăсене вара çакăн пек çыпăçтарнă ӳкер-чĕксем çинех çырма пулать. Çырасса ку ӳкерчĕк çинче лайăхрах палăрса тăракан сăрпа çырмалла. Ун пек сăрсем çук пулсан, сăр выранне цифрăсене хутран касса кă-ларса çыпăçтарма та пулать. Кун пек чух вĕ-сене темиçе тĕслĕ хутран касса кăларсан авантарах.




34-ӳк. Ӳкерчĕксемпе илемлетнĕ тата ӳкерчĕклĕ фон çине тунă диаграммăсем.

Юлашкинчен тата çакна асăрхаттарса хăварма пулать: кирек мĕнле диаграммăра та текста ăнланмалларах та кĕскен çырма тăрăшмалла.

## СТЕНА ХАÇАТНЕ ИЛЕМЛЕТЕССИ

Стена хаçачĕн илемĕ пуринчен ытла ăна ӳкерчĕксемпе илемлетнинчен килет. Стена хаçатĕнчи ӳкерчĕксем хаçатăн илемлĕхне кӳнисĕр пуçне тата унта çырнă статьясене лайăхрах ăнланса илме пулăшаççĕ. Çавăнпа та стена хаçатĕнчи ӳкерчĕксене мĕнле тăвассипе вĕсене хаçатра мĕнле вырнаçтарасси çинчен тĕплĕн пĕлни кирлĕ.

Стена хаçачĕ валли ӳкерчĕксем тума тытăниччен малтан редколлегинчен хаçатăн текстлă материалне илсе, вĕсене тĕплĕн вуласа тухас пулать. Вуласа тухса ăнланнă хыççăн, хăш статьяна хăш тĕле вырнаçтарассине, хăш статьяра мĕнле ӳкерчĕксем, карикатурăсем кирлине палăртса хурас пулать.

Ӳкерчĕксем валли вырăн хăварнă чух вĕсене пурне те пĕр кĕтессе е варрине, пĕр тĕле пулмалла тумалла мар. Е тата ӳкерчĕксем питĕ нумай тата ытла пысăк пулсан та хаçат илемлĕхне чакарать. Хаçатра ӳкерчĕксем 1/3 пайран ытла пулмалла мар.

Пуринчен ытла стена хаçачĕн заголовокне (ятне) илемлĕрех тума тăрăшас пулать, мĕншĕн тесен вăл хаçатăн пичĕ пулса тăрать.

Заголовокăн илемлĕхĕ хаçатăн ятĕнчен те килет. Хаçатăн ячĕ темиçе сăмахлă пулни аван мар. Нумай сăмахлă заголовока çырнă чухне вĕтĕ саспаллисемпе çырма лекет, вĕтĕ саспаллисене илемлĕ çырма хĕнтерех.

Заголовока илемлетнĕ чухне ăна хаçатăн ячĕпе çыхăнса тăракан ӳкерчĕксемпе илемлетесçĕ (35-мĕш ӳкерчĕк). Анчах ăна пĕтĕмĕшпех ӳкерчĕксемпе тултарса лартни те кирлĕ мар.

Лайăх илемлетнĕ заголовока нумайлăха хăварма пулать. Кун пек чух хаçата çĕнĕрен кăларнă май номерĕпе числисене çеç улăштарса тăраççĕ.

Заголовок евĕрех тата статьясен ячĕсене те ӳкерчĕксемпе илемлетме пулать. Калăпăр, статья колхоз ферми ӳсĕмĕсем çинчен калать. Кун пек статьян ятне фермăри выльăхсене ӳкерсе илемлетме пулать (35-мĕш ӳкерчĕк). Çавăн пекех тата статьясен хыçне те концовкăсемпе илемлетме пулать.

Стена хаçатне ӳкерчĕксемпе илемлетнĕ чухне час-часах тата диаграммăсем тума лекет. Диаграммăсене мĕнле тăвасси çинчен эпир малта ăнлантарса панăччĕ.




35 ўк. Стена хаçачĕн макечĕ.

Халĕ тата карикатура ўкерессипе çинчен каласа парар.

Карикатура вăл ўкерчĕке кулăшла туса ўкерни пулать. Карикатура вăл хаçата чĕрĕлетет, ăна вулас килет. Карикатурăра чи кирли—ăна кулăшла тăвасси. Çавăнпа та, карикатурăна ўкернĕ чух, вăл кулăшла, характерлă пултăр тесен, яланах çакна асра тытмалла: çыннăн сăмси вăрăм пулсан, ăна тата вăрăмрах, çўçĕсем лапсăркка, тирпейсĕр пулсан, ăна тата тирпейсĕртерех, пичĕ сар-



36 ӳк. Ҫыннӑн пит-куҫ мимики тӗрлӗ вӑхӑтра мӗнле улшӑнни.

лака, мӑнтӑр пулсан, ӑна тата сарлакарах тата ыт. те туса ӳкермелле.

Карикатура ӳкерес пулсан этем пит-куҫӗн мимикине питӗ аван пӗлни кирлӗ. Ҫын хӑраса ӳкнӗ пулсан, вӑл куҫсене чарса пӑрахать, куҫ харшисем ҫӳлелле хӑпарса тӑраҫҫӗ. Карикатурӑра ҫаксене раснах палӑртмалла.

Ҫынсене карикатурласа ӳкернисӗр пуҫне тата ытти ҫитменлӗхсене те карикатурласа ӳкерме пулать. Сӑмах-



37 ўк. Карикатура.

ран, колхозра ĕç хатĕрĕсем тирпейсĕр япăхса выртаççĕ. Вĕсем çуллахи вăхăтра япăхса выртаççĕ пулсан, вĕсем çине кăмпасем шăтса тухнă пек туса ÿкерме пулать. Хĕллехи вăхăтра пулсан, вĕсене юр айĕнче кăшт кăна курăнакан туса ÿкерме пулать. Кун пек чухне çав япаласене патĕнчех ÿкерсе илсен тата та авантарах пулĕччĕ.

Стена хаçатне ÿкерчĕксемпе, карикатурăсемпе илемлетнĕ чухне вĕсене статьясене çырнă хут çине мар, уйрăм хут листи çине ÿкерсен авантарах. Мĕншĕн тесен, тепĕр чух ÿкерчĕк тĕплĕ пулман пирки, ăна тепĕр хут ÿкерме лекет. Çапла вара пĕрре çырнă статьяна тепĕр хут çырма лекет.

# ТУПМАЛЛИ


*Стр.*

Умĕн калани . . . . . . . . . . . . . . . . . . 3

**I-мĕш пайĕ**

Ӳкерме вĕренме мĕнле хатĕрсемпе материалсем кирлĕ . . . . . . . . . . . . . . 7
Ӳкерме мĕнрен тытăнмалла . . . . . . . . . . . 10
Акварельлĕ сăрсемпе ӳкересси . . . . . . . . . . 23
Пейзажсем ӳкересси . . . . . . . . . . . . . . . 33
Портрет тата çын кĕлеткине ӳкересси . . . . 42
Çуллă сăрсем тата вĕсемпе ĕçлесси . . . . . . 67
Çилĕмлĕ сăрсем тата вĕсемпе ĕçлесси . . . . . 67

**II-мĕш пайĕ.**

Клубсене, вулав çурчĕсене тата шкулсене илемлетесси . . . . . . . . . . . . . . . . . . 71
Диаграммăсем тăвасси . . . . . . . . . . . . . 78
Стена хаçатне илемлетесси . . . . . . . . . 81

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
Чебоксары

Редактор *М. Романов.* Тех. редактор *И. Григорьев.*

НТ 00582 Подписано к печати 9/X—48 г.
Тираж 5.000 экз. Заказ № 1558

Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при Совете Министров ЧАССР
г. Чебоксары, Дом печати.

Хакĕ 2 тен.
Цена 2 руб.

Г. ХАРЛАМПЬЕВ

# ЮНЫЙ ХУДОЖНИК

на чувашском языке

ЧУВАШГОСИЗДАТ
Чебоксары — 1948